Пĕтĕм тĕнчери пролетарием, пĕрлешĕр!

1938 ИЙУН 27 ТУНТИКУН 146 (4959) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухат. *ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ* Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67. Ред. заместителĕн 0—88. Редакци секретарĕн 4—40. Дежурнăйăн 6—23

Ĕнер чăваш халăхĕ Аслă Сталина тата унăн çывăх соратникĕсене Чăваш АССР Верховнăй Советне суйларĕ

Пĕтĕм халăх уйавĕ

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кунĕ—ийунĕн 26-мĕшĕ — пĕтĕм халăхăн савăнăçлă уйавĕ пулса тăчĕ. Хаваслăн та савăнăçлăн иртерчĕ чăваш ĕçхалăхĕ аслă уйава—суйлав кунне. Чечекленекен Чăваш республикĕнчи ĕçхалăхĕ коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсемшĕн, Ленинпа Сталин аслă партийĕшĕн сасăларĕ. Чăваш халăхĕн савăнăçĕ вăл—ленинла-сталинла наци политикĕн çĕнтерĕвĕ, коммуниссен партийĕ йертсе пынипе, аслă вырăс рабочи класĕ пулăшнипе хăйне валăçи тата çитĕс ăрусем валăçи телейлĕ пурнăç кĕрешсе илнĕ халăхсен тăванла туслăхĕн çĕнтерĕвĕ.

Çак чаплă та савăнăçлă куна чăваш ĕçхалăхĕ пысăк çĕкленÿпе хатĕрленчĕ. Хапрăксемпе савăтсем, предприйатисем, колхозсем, уйхир стахановцисемпе ударникĕсем суйлав кунне производствăлла ÿсĕмсемпе паллă турĕç. Канашри вакунсем йусакан савăтри тимĕрç, кăскалакан тата механичĕски цехсенчи рабочисем хăйсен суйлав округĕ тăрăх халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма килĕшнипе хавхаланса çурçулти плана срукчен тултарчĕç. Тимĕрç цехĕнчи Йегорушкин йулташ смени ийунĕн 25-мĕшĕнче сталин-[illegible] мăна 461 процент тултарнă. Стахановĕц Дементйĕв йулташ хăйĕн нормине 1100 процент тултарса рекордлă ÿсĕмсем тунă. Шупашкарти тир-сăран, Вăрнарти фосфорит, Сĕнтĕрвăрринчи катка-пичке савăчĕ тата ытти предприйатисем суйлав кунне çурçулти плана срукчен тултарнипе уйавларĕç. Вăрнарти МТС трактăрсене тата тырпулсене пухса кĕмели машинăсене пурне те суйлав кунĕ çитнĕ тĕле йусаса хатĕрлесе лартнă. Пур предприйатисенче те, колхозсенче те чаплă çынсен — стахановĕцсен рĕтне çĕршер, пиншер çынсем тăчĕç.

Ийунĕн 26-мĕш кунне пĕтĕм чăваш çĕршывĕ уйав савăнăçĕпе кĕтсе илчĕ. Нумай суйлавçăсем ирех, суйлав участкисем ĕçleме тытăниччен, хăйсен граждăн тивĕçне пуринчен малтан пурнăçа кĕртме, хăйсен сасĕсене çĕршывăн чаплă ывăл-хĕрĕсемшĕн, йуратнă çынсемшĕн пама васкарĕç. Пур суйлав участкисене те 6 сехет тĕлне суйлавçăсем йышлăн пухăннă.

Канаш савăт суйлав округĕнчи суйлавçăсене пĕтĕм чăваш халăхĕн кăмăл-ирĕкне кăтартас, чăваш халăхĕн пĕрремĕш кандидачĕшĕн, йуратнă, аслă, тăван Сталиншĕн сасăлас пысăк телей тиврĕ. Сталин йачĕпе хамăрăн чаплă çĕршыври ĕççыннисен пĕтĕм çĕнтерĕвĕсем çыхăнса тăраççĕ, унăн йачĕ малта пыракан пирĕн этемлĕхе фашистла варварсене хирĕç кĕрешме, капиталистсем чуралама пĕтнĕ тĕнчипех пĕтерме чĕнет. Вĕсем хăйсен сасисене Сталин йулташшăн пама тивĕç илнĕшĕн, аслă Совет Сойузĕн халăхсене Ленин савăнăçлă, телейлĕ пурнăç патне çĕнтерÿллĕн çĕнтерÿ патне илсе пыракан Сталиншăн пама тивĕçлĕ пулнишĕн савăнаççĕ.

Сталин йулташ суйланакан округри 6-мĕш суйлав участокĕнче чи малтан слесăр-стахановец Орлов йулташ, унпа пĕрле—Данилăв, Борисăв, Крылов стахановецсем сасăларĕç. Вĕсем пурте суйлав умĕнхи социалисăмла ăмăртăва анлăн вăйлатса пынă, хăйсен ĕçнормисене 200 процентран пуçласа 500 процент таран тултарса пынă. Çав округрах 7-мĕш суйлав участокĕнче пуринчен малтан Кукăйăв, Фомин, Чернухин стахановецсем сасăлана. Кукăйăв йул.

суйлав йачĕпе пулнă сталинла вахтăна тăрса 4 сехет хушшинче хăйĕн пĕркунхи ĕçнормине 400 процент тултарнă. Вăл ийунĕри плана 355 процент пурнăçа кĕртнĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма Молăтăв, Каганович, Ворошилăв, Калинин, Микойан, Андрейĕв, Йежов, Жданăв йулташсем килĕшÿ панă округсенчи суйлавçăсем суйлав урнисем патне пысăк савăнăçпа пычĕç. Чурачăк суйлав округĕнчи Чурачăк суйлав участкине суйлава арăмĕпе тата икĕ хĕрачи суйлавçăсемпе пынă колхозник Йегор Тимофейĕв хăйĕн бÿллетенне суйлав йешчĕкне йанă хыççăн çапла каланă:

„Пайан епĕр хамăр участкăра никамран малтан сасăлама тивĕçлĕ пултăмăр. Епĕ чĕре тулли савăнăçпа коммунисла партишĕн, хамăрăн совет халăхĕн чи шанчăклă ывăлĕшĕн, аслă Сталинăн çывăх соратникĕшĕн—Николай Иванăвич Йежов йулташшăн сасăларăм. Сталинла, Нарком Йежов йулташ йертсе пынипе пирĕн наркомвнуделĕцсем халăх тăшманĕсене пĕтерсе пирĕн телейлĕ пурнăçа сыхлаççĕ".

Совет правительстви пуçлăхĕ Молăтăв йулташ баллотировкăна тăнă Шупашкар хулинчи 2-мĕш [illegible] участкине пырсан суйлавçă, ватă рабочи—Н. А. Богатырĕв йулташ çапла каларĕ: „Пайан пысăк уйав, хамăн савăнăçа каласа пама сăмахăм та çитмест. Пайан епĕ суйлав участкине малтан килсе сасăлас шухăшпа йеркелĕ çывăраймарăм та. Участкăна ир çитрĕм, анчах манран маларах çитнисем те пулнă".

Чăваш халăхĕ пур суйлав участкисенче те коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсемшĕн, чаваш халăхĕн чи лайăх ывăл-хĕрĕсемшĕн пĕр шухăшлă пулса пысăк хастарлăхпа, пысăк организацилĕхпе сасăларĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлама палăртнă М. И. Калинин йулташ сасăланакан Çавалкас суйлав округĕнче (Вăрнар р.) ирхине 11 сехет тĕлне суйлавçăсенчен 95 проценчĕ сасăлана. Трак районне кĕрекен округсенче ирхине 10 сехет тĕлне 80 процент, Елĕк районне кĕрекен округсенче 11 сехет тĕлне 84 процент сасăлана.

Чăваш ĕçхалăхĕн савăнăçĕ çав тери пысăк: чылай çĕрте Октябер революцийĕччен вырăхпа чуралăхра асапланса хĕн курса пурăннă старикĕсемпе карчăксем суйлав участкисене чи малтан пырса хăйсен хисеплĕ граждăн тивĕçлĕхне пурнăçларĕç. Вĕсем, ĕлĕк пусмăрта пурăннă чăваш халăхĕн свидетĕлĕсем, халĕ хăйсене телейлĕ пурнăç панăшăн Ленин—Сталин партине ăшшăн аманă хăйсен ачине йуратнă пек йуратса, ăшшăн, чĕререн тав тăваççĕ.

Суйлав участокĕнче халăхсен савăнăçĕ пысăк. Çамрăксемпе ваттисем пĕрле ташласа, йурласа савăнаççĕ.

Ака Кăрмани, Сиккасси (Канаш районĕ) суйлав участкисенчи суйлавçăсем кăнтăрла иртсен 3 сехет тĕлне сасăласа пĕтерчĕ, анчах вĕсем çапах та киле саланмаççĕ.

Пĕтĕм чăваш халăхĕ чаплăн савăнат.

Ийунĕн 26-мĕшĕ—РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлама кун—совет халăхĕн никам çĕмĕреймен морально-политикăлла пĕрлĕхне, халăх Ленин-Сталин партийĕ, унăн Тĕп Комитечĕ, Совет правительстви тата халăхсен çулпуçĕ аслă Сталин таврă çирĕппĕн пĕтĕçнине уççăн кăтартса паракан никăçан манми кунĕ пулса тăчĕ.

Çавалкас суйлав округĕ

М. И. Калинин йулташшăн

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Вăрнар районĕнчи Çавалкас суйлав округне кĕрекен избирательсем Михаил Иванăвич Калинин йулташ кандидатуррине сасăлана.

Округра суйлав лайăх иртнĕ. Енер 11 сехет тĕлнех суйлавçăсенчен 90—95 проценчĕ сасăласа пĕтернĕ.

Кĕçĕн Йавăшра чи малтан 72 çулти колхозник Илйин Григорий сасăлана.

Çавалкас колхозĕ суйлав кунне производствăлла çитĕнÿсемпе кĕтсе илнĕ.

Канаш савăт суйлав округĕ

Сталин—пирĕн хĕвел

КАНАШ, 26.VI (хамăр корр.). Йалавсен вăрманĕ ирхи уçă çилпе йерипен хумханат. Вакунсем йусакан савăт хыçĕнчи вăрман çине пысăк та хаваслă хĕвел кусса тухат. Унăн ылттăн çути социалисăмлă хулан çутă кантăкĕсем çине ÿксе пин тĕслĕ хĕлхемсемпе йалтăртатма тытăнат.

Вакунсем йусакан савăтри рабочисем хĕвеле ура çинче кĕтсе илчĕç. Вăранчĕ музыкă. Вышкă çинчи хăватлă репродуктăртан аслă Мускав сасси йанраса кайрĕ. Пĕтĕм çĕршыв тăрăх кайакан Мускав йурри савăтри рабочисен ирхи йуррипе пĕрлешрĕ.

Рабочисем, работницăсем ушкăнĕ-ушкăнĕпе суйлав участкисем йеннеле утаççĕ. Кашнин чĕринче пайан пĕр кăмăл, пĕр хаваслăх, пĕр телей, тĕнчери пĕр аслă та çутă сăмах—Сталин.

Рабочисем, работницăсем ку йата хăйсен черисенче тĕнчери нимĕнрен хаклă, нимĕнрен çывăх та тăван йапала пек çĕклесе пыраççĕ.

— Сталин!

Вăл—пирĕн хĕвел!

Вăл хăйĕн аслă ĕçĕсемпе аслă социалисăмла çĕршыври çĕрçитмел мĕлйунлă совет халăхне нихăçан сÿнми, сутă, нихăçан сивĕнми хĕрÿлĕх, нихăçан çухалми телей парса тăрат.

Сталин—Ленинăн чи шанчăклă, чи çирĕп ученикĕ. Вăл коммуниссен аслă партине, аслă совет халăхне Маркс—Енгĕлс—Ленин йалавĕ айĕнче аслăран аслăрах çĕнтерÿсем патне илсе пырат.

Ленин—Сталин партийĕ çирĕп йертсе пынипе совет халăхĕ пур тĕрлĕ тăшмансене — троцкиссене, бухаринĕцсене, буржуалă-националиссене, фашиссен ирсĕр йыттисене çĕмĕрсе такса, совет çĕршывне тĕнчере никам çĕнеймен çĕршыв туса хучĕ.

Аслă Сталин хăйĕн хăватлă аллипе социалисăмлă çĕршывăн тÿпине çĕнĕ Конституцин хĕвелне çĕклесе, совет халăхне аслă пурнăç прависем пачĕ.

Сталин йулташ пулăшнипе пирĕн чăваш халăхĕ те аслă Сойуз çемйинче пĕртан правалă халăх пулса тăчĕ.

Ÿсет, чечекленет пирĕн республикă. Ун çинчен акă пайан суйлав участкисене утакан рабочисен, работницăсен хаваслă сăнĕсем, социалисăмлă хулан çÿлĕ çурчĕсем çинче вĕлкĕшекен çĕнтерÿ йалавĕсем калаççĕ.

Пилĕк-ултă çул кайарах кунта пушă-ырхан уйхир сарăлса выртнă. Кĕркуннехи çилпе çăра арăмути вăрманĕ кашланă.

Сталинла индустриализаци политики ку пушă вырăнсене тулли те хаваслă пурнăç кÿчĕ.

Ĕлĕкхи Шăхран хули хыçĕнчи çеçенхир пирĕн республикăн чи илемлĕ кĕтесĕ пулса тăчĕ.

Пуйан та хаваслă, телейлĕ пурнăçшăн чăваш рабочийĕсемпе работницисем пайан коммуниссен партине, вырăс рабочи класне, халăхсен аслă çулпуçне Сталин йулташа чĕререн тавтăваççĕ.

Çавăн çинчен каласа çырнă пайан социалисăмлă хула çинче варкăшакан йалавсемпе лозунгсем çине.

Епĕр Канаш савăт суйлав округĕн 6-мĕш суйлав участкинче.

Пилĕк сехет тĕлнеле савăт клубне халăх пухăнса çитрĕ. Акă çамрăксем ушкăн-ушкăнăн карталаннă. Ташлаççĕ, йурлаççĕ, выляççĕ.

Вăхăт сисĕнмесĕрех 6 сехет çитрĕ. Клубра тĕнчери пролетарисен гимнĕ „Интернационал" кĕрлесе кайрĕ.

6-мĕш суйлав комиçци председателĕ Гусарăв йулташ суйлав пуçланни çинчен пĕлтерет.

Рабочисем, работницăсем пĕрин хыççăн тепри йĕркелĕн суйлав комиççин çекретарĕ ларакан сĕтел патне пыраççĕ, кăвак тата шурă бÿллетенсем, конвертсем илеççĕ, сасăламали кабинăсене кĕреççĕ, унтан тухсан урнăсем патнеле утаççĕ. Совет гражданинĕн—Канашри вакунсем йусакан рабочийĕн утти пайан мăнкăмăллă та çирĕп. Мĕншĕн тесен, вăл урнă патнеле Ста-[illegible] çĕклесе пырат.

Улттăмĕш суйлав участкинче пуринчен малтан савăтри паллă стахановĕц слесăр Орлов сасăларĕ. Вăл—чăваш ачи, совет саманинче çитĕннĕскер. Ун хыççăн Данилăв, Борисăв, Крылов стахановĕцсем сасăлаççĕ. Пурте вĕсем суйлав умĕнхи производствăлла походра хăйсен ĕç нормисене 200-тен пуçласа 500 процента çитиччен тултарса пынă.

Пĕрин хыççăн тепри кĕреççĕ чипер тумланнă хĕрачасем—савăтри стахановкăсем. Вĕсем урнă патне пырса, участкăри суйлав комиçци членĕсене пайанхи пĕтĕм халăх уйавĕн йачĕпе ырă сывлăх сунаççĕ.

Çиччĕмĕш суйлав участкинче пуринчен малтан Кукăйĕв, Фомин, Чернухин стахановĕцсем сасăларĕç. Кукăйĕв йулташ ĕнер суйлав умĕнхи сталинла вахтăна тăрса, тăватă сехет хушшинче хăйĕн нормине 400 процент тултарнă, унччен малтанхи вахтăра вăл 750 процент тунă. Ийун уйăхĕнчи программăна вăл 355 процента йахăн тултарнă. Вăл, 1913 çулта çуралнăскер, çамрăк-ха, анчах унăн хĕрÿлĕхĕ, пултарулăхĕпе ăсталăхĕ çулне кура мар пысăк. Вăл хăйĕн çитĕнĕвĕсене аслă Сталин йачĕпе туса пырат.

Хаваслăн, тулли кăмăллăн иртсе пырат суйлав. Канаш савăт суйлав округĕнчи ĕççыннисем пайан аслă Сталиншăн савăтри пĕтĕм рабочисем йуратакан Антонăвă стахановкăшăн сасăлаççĕ.

— Сталин—пирĕн хĕвел! — тесе йурлаççĕ рабочисем.

Арк. Ĕçхĕл.

Чурачăк суйлав округĕ

Ленин—Сталин партийĕшĕн!

ЧУРАЧĂК, Çĕрпÿ районĕ (хамăр корр., телефонпа). Чурачăк суйлав округĕнчи суйлавçăсем пайан ЧАССР Верховнăй Совет депутатне суйлама палăртнă Н. И. Йежов й-шăн тата РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă З. А. Андрейĕвă йулташшăн сасăлаççĕ.

Чурачăк суйлав участкине ирхине 5 сехетре суйлавçăсем пыма пуçларĕç. 6 сехет. Участкăри суйлав комиççи председателĕ суйлавçăсене сасăлама тытăнма чĕнет.

Ку участкăра чи малтан 65 çулхи колхозник Йегор Тимофейĕв тата унăн арăмĕ Улйанă Илйинична сасăларĕç. Вĕсемпе пĕрлех сасăлама икĕ хĕрĕ тата ывăлĕ пынă.

Сасăланă хыççăн Йегор Тимофейĕв хĕрлĕ кĕтесе кĕрсе çакна каларĕ:

— Пайан епĕр хамăр участкăра никамран малтан сасăлама тивĕçлĕ пултăмăр. Епĕ чĕре тулли савăнăçпа коммунисла партишĕн, хамăрăн совет халăхĕн чи шанчăклă ывăлĕшĕн, аслă Сталинăн çывăх соратникĕшĕн Николай Иванăвич Йежов йулташшăн сасăларăм. Сталинла Халăх Комиссарĕ Йежов йулташ йертсе пынипе, пирĕн наркомвнуделĕцсем халăх тăшманĕсене пĕтерсе пырса, пирĕн телейлĕ пурнăçа сыхлаççĕ. Коммуниссен партийĕ пире çĕнтерÿсем тума малала йертсе пырат. Çавăнпа епĕр Ленин—Сталин партишĕн сасăлатпăр, хамăр сасăсене чи шанчăклă йулташсемшĕн паратпăр!

Округри пур участкăсенчен те суйлавçăсем сасăлама калама çук пысăк хастарлăхпа пыни çинчен пĕлтереççĕ. Кăнтăрла 12 сехет тĕлне суйлавçăсен тĕп масси сасăланă та!

Суйлав участкисем çумĕнчи хĕрлĕ кĕтесре радио ĕçлет, шашкă, биллиард, буфетсем пур. Ватăлăха пула йе ытти сăлтавпа суйлав участкине хăйсем тĕллĕн пырайман суйлавçăсене колхозсен чи лайăх лашисене кÿлсе илсе пыраççĕ тата киле леçсе йараççĕ.

В. Васильĕв.

Шупашкар хула 2-мĕш суйлав округĕ

Молăтăв йулташшăн сасăларĕç

Шăп 6 сехетре участкăри суйлав комиççи председателĕ Рйабчикăв йулташ суйлав пуçланни çинчен пĕлтерет. Вăл суйлавçăсене сасăлама тытăнма чĕнет. Суйлав пуçланчĕ. Участкăри суйлав комиççи çекретарĕ сĕтел умĕнче йалхуçалăх коммунисла аслă шкулĕнче вĕренекен Çтепанăвă Марийа тăрат. Вăл пĕрремĕш бÿллетен илсе сасăламали пÿлĕме кĕрсе кайат. Унтан колхоз кадрĕсен шкулĕнче ĕçлекен Артемйĕв йулташ арăмĕпе пĕрле пырса кĕрет. Олга Артемйĕвă йулташ хăй хута сахал пĕлнĕ пирки сасăламали пÿлĕме хăй упăшкине илсе кĕни çинчен пĕлтерет.

Кашни суйлавçă икĕ бÿллетен илет. Пĕри шупка кăвак тĕслĕ. Вăл бÿллетен çине çĕршывăн мухтавлă хĕрĕн йатне Перасковйа Иванăвна Калинкина йатне çырнă. Вал РСФСР Верховнăй Советне суйлама регистрациленĕ кандидат. Тепĕр бÿллетенĕ шурă тĕслĕ. Ку бÿллетен çине аслă Сталинăн чи çывăх соратникĕн Вйачеслав Михайлăвич Молăтăв йатне çырнă. Молăтăв йулташ—ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама регистрациленĕ кандидат.

Пĕрин хыççăн тепри суйлав участкине пырса кĕреççĕ. Пурте хаваслă. Уйаври пак чаплă тум-[illegible] йешчĕкĕ умне хăйĕн сассине коммуниссен партин шанчăклă ывăлĕ, совет правительствин пуçлăхĕ—Молăтăв йулташшăн тата тăван çĕршывăн мухтавлă хĕрĕ—Калинкин йулташшăн парас ĕметпе пырат.

— Антонăв, Иван Антонăвич,—тесе пĕлтерет участкăри комиççин членĕсем ларакан сĕтел умне ларса, ватăм пÿллĕ çамрăк ача. Унăн кăкăрĕ çинче Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ йалкăшат. Вăл паттăр пограничник пулнă, халь студент. Антонăв йулташ шурă тĕслĕ суйлав бÿллетенне илнĕ хыççăн, ăна хăй ăшĕнче ик-виç хут вуласа тухрĕ. МОЛĂТĂВ! Сталин йулташăн чи çывăх тусĕ. Çак минутра вăл Полша чиккинче иртернĕ паттăр кунсене, хăйĕн тăван Хĕрлĕ Çарне татах тепĕр хут аса илчĕ. Унтан сасăламали пÿлĕмеле утрĕ. Халь вăл студент. Анчах партипе правительствă чĕнсен, кирлĕ вăхăтра, вăл алла пăшал тытса хăйĕн малтанхи вырăнне кайса тăван çĕршывăн чиккине паттăрăн сыхлама хатĕр.

Суйлавçăсем сасăланă хыççăн та участкăран тухса каймаççĕ. Вĕсем буфетри çимĕçсемпе апатланса тĕрлĕ пÿлĕмсене саланаççĕ. Хăшĕ-пĕрисем канмали пÿлĕме, теприсем биллиардла выляма, патефонсем итлеме саланаççĕ. Пĕчĕк ачасене валли хăйсене уйрăм пÿлĕм.

Кану пÿлĕмĕнче патефон сасси йанрат. Суйлавçăсем А. С. Пушкинăн патефон пластинки çине ÿкернĕ „Йалта" йатлă сăввине итлеççĕ. Тепĕр пÿлĕмре кил хуçи хĕрарăмсен хорĕ йурлат.

Тин çеç машинă çинчен анса суйлав çуртне пырса кĕнĕ ватă карчăк хăлхине йурă сасси илтĕнсе кайрĕ. Вăл йурă илтĕнекен пÿлĕм йеннеле утрĕ.

— Кипучая,
Могучая,
Никем непобедимая.
Страна моя,
Москва моя
Ты самая
Любимая!

Ватă карчăк чылайччен çак савăнăçлă йурăпа итлесе ларчĕ. Хорта йурлакансен йышĕнче çак ватă карчăкран кăшт çеç çамрăккисем те пур.

Хор йурлама чарăнчĕ. Карчăк пичĕ çине йухса аннă куççульне шăлса илчĕ те, суйлав комиççи вырнаçнă пÿлĕме кайма иккĕмĕш хута хăпарма тытăнчĕ. Ăна çамрăк хĕрача хулĕнчен тытрĕ, пусма тăрăх [illegible]

— Хурланса мар, саваннипе манăн куççул тухрĕ. Хамăрăн иртнĕ кунçулсене аса илтерчĕ пайанхи кун. Саванăçлă йурă ман чĕрери кăмăла çемçетрĕ.

Участкăри суйлав комиççинче карчăка йатпа чĕнчĕç.

— Йурашĕвă, Любовь Иванăвна, 1860 çулта çуралнă.

— Епĕ,—терĕ вăл. Унтан бÿллетенсене алла илчĕ. Вулама тăрăшрĕ, анчах вуласа кăлараймарĕ. Куçĕсем вăйсăрланнă. Комиççи членĕсем хăш бÿллетенне камсен йачĕсене çырни çинчен ăнлантарса пачĕç.

— Молăтăв йулташ йатне те, Калинкина йатне те илтнĕ,—терĕ.

Суйлав кунĕ пĕтĕм халăх праçникĕ пулса тăчĕ. Ваттисем те, çамрăккисем те—пурте пĕр кăмăлпа суйлава тухса коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсемшĕн сасăласа, çав блокăн тепĕр çĕнтерÿне турĕç.

Шупашкар хулинчи 11-мĕш суйлав участкинчи суйлаçăсем ĕнер аслă Сталинăн чи çывăх соратникĕшĕн—Молăтăв йулташшăн тата хула совет председателĕ—Калинкина йулташшăн сасăларĕç.

М. Митрофанăв.

Мучар суйлав округĕ

Пысăк хисеп

ТĂВАЙ. Ийунĕн 26-мĕш (телефон тăрăх). Мучар йалĕ. Ирхи хĕвелĕн малтанхи пайăркисемпе сывлăмлă курăксем йалтăртатма пуçласан Тăвай районĕнчи Мучар йалĕнче уйав хаваслăхĕ пуçланчĕ. Çуртсем çинче йалавсем вĕлкĕшеççĕ. Йал капăр тумланнă.

Пилĕк сехет кăна. Халăх участкă çуртне пухăна пуçларĕ. Колхозниксем йалавсем йатса суйлава пухăнаççĕ. Участкăри суйлав комиççи председателĕ Романăв йулташ суйлав пуçланни çинчен пĕлтерсен, бÿллетенсем илме чи малтан Жарковпа Пугачов ватă колхозниксем пырса тăчĕç.

— Чăваш республикĕн Верховнăй Советне депутата ССР Сойузĕн пĕрремĕш маршалĕ—Климентий Йефремăвич Ворошилăв суйланни пирĕншĕн пит пысăк хисеп, чыслăх,—терĕç вĕсем сасăланă хыççăн. Вĕсем хыççăн колхозниксем йĕркелĕн бÿллетенсем илме тытăнчĕç. Пĕр сехет хушшинчех 400 çын сасăларĕ.

Суйлав çуртĕнче туллийех чечексем. Буфет ĕçлет. Суйлавран тухсан çамрăксем ташăсем ташласа, йурăсем йурласа, вăйăсем выляса вăхăта савăнăçлăн иртереççĕ.

Ухсай Йаккăвĕ.

Хамăр çĕршывăн тĕрекĕшĕн сасăларăмăр

ТĂВАЙ, ийунĕн 26-мĕшĕ (телефон тăрăх). Тăрмăшра икĕ суйлав участки. Икĕ участки те суйлавçăсене кĕтсе илме лайăх хатĕрленнĕ. Суйлав участкисем вырнаçнă çуртсене хĕрлĕ йалавсемпе, плакатсемпе, суйлава чĕнекен лозунгсемпе, партипе правительствă руководителĕсен портречĕсемпе илемлетнĕ.

Пилĕк сехет иртсен суйлавçăсем организацилĕн, хĕрлĕ йалавсемпе суйлав участкисен çурчĕсем патне пуçтарăна пуçларĕç.

Тăрмăш участкисене кĕрекен суйлавçăсем Чăваш АССР Верховнăй Советне Тăвай райĕçтăвком председателне Родионăвă йулташа, РСФСР Верховнăй Советне Канашри вакунсем йусакан савăтри стахановкăна Антонăвă йулташа депутата суйлаççĕ. Икĕ депутачĕ те хĕрарăм пулни уйрăмăнах хĕрарăмсен кăмăлне питĕ çĕклентерет.

— Пирĕн çĕршывра чăнахах та хĕрарăмсем арçынсемпе пĕртан. Пирĕн çĕршывра хăйне ĕçре кăтартнă çын,—хĕрарăм-и вăл, арçын-и, пурĕ пĕрех Верховнăй Совета суйланма пултарат,—теççĕ вĕсем.

Уйрăмăнах суйлав Мушар округне кĕрекен участкăсенче питĕ организацилĕн иртет. Ку округ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата ССРС Оборона Халăх Комиссарĕ—пĕрремĕш маршал Климетий Йефремăвич Ворошилăв суйланат.

— Ворошилăв йулташшăн сасă парса епĕр хамăр çĕршывăн никам çĕнтерейми хăвачĕшĕн, хамăрăн Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флотăн тĕрекĕшĕн сасăларăм,—теççĕ суйлавçăсем.

Çергейĕв.

ПӖТӖМ ЧӐВАШ ХАЛӐХӖ СТАЛИНЛА БЛОК КАНДИДАЧӖСЕМШӖН— ҪӖРШЫВӐН ШАНЧӐКЛӐ ЫВӐЛ-ХӖРӖСЕМШӖН САСӐЛАРӖ

Телейлӗ пурнӑҫшӑн сасӑларӑм

Ҫак хаваслӑхпа тапса тӑракан праҫник кунӗсенче епӗ те, пекар-пенсионер, пӗр-ик сӑмах ҫырмасӑр чӑтса тӑма пултараймастӑп.

Хаљхи вӑхӑтра пурнӑҫ мӗнле лайӑх та телейлине тӗплӗнрех тавҫӑрса илес пулсан, ӗлӗкхи асаплӑ пурнӑҫа аса илни те чӑрмантармасть. Ака епӗ хамӑн пурнӑҫри хӑш-пӗр сыпӑкӗсене аса илетӗп.

Епӗ Паҫпак йалӗнче (Шупашкар районӗ) 1896 ҫулта ҫуралнӑ. Пирӗн килти пурнӑҫ шутсӑр чухӑн пулнӑ. Хамӑр акса тунӑ тырпул йалаццӑх ҫур хӗлте пӗтнӗ. Вара ирӗксӗрех кулаксем патне кивҫене кайнӑ. Кулак танатипе пӗрре ҫаклансан, унтан вӗҫерӗнме хӗн вара. Кивҫен парса „пулашнӑшӑн тавтуса" кулака ыраш вырса, вӑйӑн ҫапса пӑрахтӑмӑр. Ҫӗнӗ тырӑ пулсан кивҫен илнӗ тыррине ҫав-ҫавах сӑнтарса илетчӗ. Йалти пӗтӗм чухӑнсем пекех, епӗр те хура йӗркре пурӑнаттӑмӑр.

Епӗ 11 ҫулта чухне манӑн анне вилнӗ. Вуникӗ ҫула ҫитсен йалтан пӑхаҫса кайрӑм. Ҫӗрпӳре, Шупашкарта т. ыт. хуласенче те хуҫасем патӗнче ӗҫлесе пурӑнтӑм. Ҫӗрпӳре Матушӗв хуҫа патӗнче пекарнинче ученик шучӗпе ӗҫленӗ чухне уйӑхне пӗр тенкӗ тӳлетчӗ. Ӗҫлесси ҫавах, мӑнисемпе танах, талӑкра 16—18 сехет ӗҫлетӗн.

Хусанта Герасимӑв хуҫа патӗнче ӗҫленӗ чухне чуста ҫӑрнӑ вӑхӑтра чӗрне кутне шӑрпӑк кӗрӗ. Пӳрне шыҫса кайнипе уйӑх та виҫӗ кун ӗҫлеймерӗм. Ҫав вӑхӑтшӑн хуҫа мана пӗр пус та тӳлемерӗ. Унчухне рабочисен интересне никам та сыхламан. Рабочине ҫын вырӑнне хурса шутламан.

1915 ҫулта мана патша ҫарне илсе кайрӗҫ. Вӑрҫӑра аманнӑ хыҫҫӑн, салтакран султалӑкранах тавӑрӑнтӑм. Каллех Шупашкарти Геронтйӗв хуҫа патне пекӑра килсе кӗтӗм.

Ӗлӗкхи вӑхӑтра ӗҫсыннисем государствӑ ӗҫне хутшӑнма пултарайман. Манӑн хуҫа Геронтйӗв хула управине члента тӑрачӗ. Вӑл час-часах тӗрлӗрен пуххусене ларусене ҫӳречӗ. Пӗрре, йурийех, ҫапла ыйтрӑм:

— Иван Петрович, — тетӗп, — пуҫйна мана та хӑвӑрпа пӗрле илсе кайӑр-ха,—тетӗп.

Вӑл:

— Сирӗн пеккисен ӗҫлес пулат, унта сиренсӗрех ӗҫ тӑвассӗ. Унта пурте чаплӑ ҫынсем,—тет.

Камсем пулнӑ-ха ҫав „чаплӑ" ҫынсем? Купцасем, пупсем, полицейскисем. Вӗсем Шупашкарта пуслӑх шутланнӑ.

Земски управа ҫапаталла чӑвашсене кӗртмесчӗҫ, „урӑл лаппӑртаттӑр", теччӗҫ.

Ҫакӑнта калана ӗлӗкхи правасӑрлӑ, асаплӑ пурнӑҫа аса илетӗп те, хаљхи пурнӑҫпа танлаштарса пӑхатӑп. Мӗн чухлӗ лайӑх хаљ пурӑнма, йепле хаваслӑ!

Епӗ пекӑр пулса 25 ҫул хушши ӗҫлерӗм. Йӑвӑрччӗ пекӑрсен пурнӑҫӗ ӗлӗк. Совет влаҫӗ вӑхӑтӗнче тин ҫын шутне кӗтӗм. Ӗлӗк хутла вӗренеймен епӗ. 1935 ҫулта ликбезра вӗренсе тухрӑм. Хаљ вулама та пултаратӑп. Хаљ епӗ пенҫионер. Мана государствӑ укҫа тӳлесе тӑрат. 1937 ҫулта Йеҫентукине курорта кайма тӳлевсӗр путӗвка пачӗҫ. Курортра пӗр уйӑх сывалса канса пурӑнтӑм. Арӑм ҫӗвӗ ертелӗнче ӗҫлет. Хватер—хула совечӗн. Пурнӑҫ лайӑх, нихӑш йенчен те хурламалли ҫук.

Ҫак телейлӗ пурнӑҫа пире бољшевиксен коммунисла партийӗ, партин тата пӗтӗм тӗнчери ӗҫсыннисен аслӑ ҫулпуҫӗ Сталин йулташ туса пачӗ. Акӑ мӗншӗн епӗ, 1938 ҫулхи ийунӗн 26-мӗшӗнче, коммуниссемпе партире тӑманнисен Сталинла блок кандидачӗсемшӗн сасӑларӑм. Сталинла блок кандидачӗсемшӗн сасӑласа, епӗ коммунисла партишӗн, Совет влаҫӗшӗн, Сталин йулташшӑн, хамӑрӑн телейлӗ пурнӑҫшӑн сасӑларӑм.

Пенҫионер А. Александрӑв.

Чӑннипех халӑх праҫникӗ

ХУЧАШ. (Телефон тӑрӑх). Йетӗрне районӗнчи Хучаш суйлав округӗнче суйлавҫӑсем 6506 ҫын. Ийунӗн 26-мӗшӗнче 12 сехет тӗлне 5982 суйлавҫӑ сасӑланӑ.

Суйлав участкисем — Ҫухрара, Шӑматра, Хучашра, Хурамалӑхра суйлавҫӑсене кӗтсе илме питӗ лайӑх хатӗрленнӗ. Акат - Шӑнар, Ҫухра, Качикасси, Ҫакалӑх суйлавҫисем участкӑсене купӑссемпе, хӗрлӗ йалавсемпе, ҫӗнтерӳлӗ савӑнӑҫ йуррисене йурласа пухӑнчӗҫ. Суйлавҫӑсем аслӑ праҫник чухнехи пекех ҫӗнӗ, илемлӗ тумтирсем тӑхӑннӑ, вӗсем савӑнаҫҫӗ, йурлаҫҫӗ, ташлаҫҫӗ, хамӑрӑн ҫӗршывра социалисӑм ҫӗнтерни ҫинчен, малашнехи задачӗсем ҫинчен калаҫҫӗ.

В. Андрейӗв.

Чи малтан вата суйлавҫӑсем сасӑларӗҫ

ШӐХАСАН. (Телефон тӑрӑх). Суйлавҫӑсем суйлав кунне пысӑк хаваслӑхпа кӗтсе илсе уйавлаҫҫӗ. Йалсем тата колхозсем уйав тумӗпе тумланнӑ. Пур суйлав участкисенче те ирхине 6 сехетрен пуҫласа суйлав бӳллетенӗсене тултарас ӗҫе тытӑннӑ. Пысӑк хаваслӑхпа тата ӗҫсыннисен пысӑк политикӑла активлӑхӗпе иртсе пырат суйлав.

Туҫи Ҫармӑс суйлав участкинчи вата суйлавҫӑсем ирхине 3 сехетре пырса, 6 сехет ҫитессе кӗтсе ларнӑ. Ку участкӑра 9 сехет те 30 минут тӗлне 800 суйлавҫӑран 620 суйлавҫӑ сасӑланӑ. Суйлав участкинче кућтурӑлӑ тата массӑлӑ ӗҫсене лайӑх организациленӗ. Хор кружокӗ тӗрлӗрен йурӑсем йурласа пачӗ. Спорт плошчадкинче ҫамрӑксем волейболла выљаҫҫӗ.

Йамаш суйлав участкинче 80 ҫула ҫитнӗ Н. Йегорӑв, 70 ҫула ҫитнӗ А. Аниҫимӑвӑ тата 68 ҫула ҫитнӗ Йевдокимӑв суйлавҫӑсем ирхине 6 сехетре суйлав участкине пырса чи малтан сасӑланӑ.

— Пайан епӗр тулли кӑмӑлпа савӑнатпӑр, пирӗншӗн пайан чи савӑнӑҫлӑ кун пулчӗ. Суйлав участкинчен нимӗнле те уйӑрӑлса кайас килмест. Ӗлӗк пирӗн пек чухӑн ҫынсене суйлава хутшӑнтарман халӗ епӗр пурте пӗртан правапа усӑ куратпӑр,—теҫҫӗ вӗсем.

Шӑхасан суйлав участки те хӑйӗн суйлавҫисене лайӑх кӗтсе илчӗ. Сасӑлас йӗрке организациленӗ иртсе пырат. Канаш—Шупашкар чукунҫул строителствинче ӗҫлекенсем пурте пӗр харӑссӑн килсе сасӑларӗҫ.

В. Чернов.

Суйлав кунӗ лайӑх иртрӗ

ИШЛЕЙ, ийунӗн 26-мӗшӗ (телефонпа). Ирхине 5 сехетре, пуҫламӗш шкул умне, „Ҫомбайн" колхозӑн хӑмӑш пек ларакан ыраш тата тулӑ хушшипе, Ентимӗркасси тата Епетер йалӗнчи суйлавҫӑсем ушкӑнӗпе пухӑнма пуҫларӗҫ. Суйлав ҫуртне ҫулпуҫсен портречӗсемпе тата лозунгсемпе илемлетнӗ.

6 сехет ҫитсен суйлав комиҫҫи председателӗ Владимир Ҫтепанӑв йултащ суйлав пуҫланни ҫинчен пӗлтерчӗ. Чи малтанах суйлав комиҫҫинчен вата колхозник, 67 ҫулхискер, Михаил Федӑрӑв йулташ суйлав бӳллетенӗсене илсе пӳлӗмеле кӗчӗ. Суйлав участкинче пурӗ 8 пӳлӗм. Суйлавҫӑсем сасӑланӑ хыҫҫӑн та киле саланмаҫҫӗ, кӗнекесем вулаҫҫӗ, шашкӑ-шахмӑтла тата биллиардла выљаҫҫӗ. Буфет ӗҫлет. Радио калаҫат. „Комбайн" тата „Чӑваш Коммунӗ" колхозсенчен вата суйлавҫӑсене суйлав ҫуртне илсе пыма 3-шер лаша уйӑрнӑ. Вӗсене лайӑх лашасемпе, тарантассемпе илсе пыраҫҫӗ. 83 ҫулхи вата колхозницӑ Йевдокийӑ Зайцӗвӑ колхозӑн ӑратлӑ ӑйӑрӗпе, тарантаспа пырсан пысӑк хаваслӑхпа суйлав бӳллетенӗсене илсе суйлав пӳлӗмӗсене кӗчӗ.

Кӑнтӑрлахи 12 сехет тӗлне 557 суйлавҫӑран 504 суйлавҫӑ сасӑланӑ. Кӑнтӑрлахи вӑхӑтра комсомол организацин шавлӑ оркестрӗ выљаса пачӗ.

Гер. Шчербаков.

Парти ӗҫӗшӗн чӗререн тӑрса ӗҫлекенсемшӗн сасӑлаҫҫӗ

ЕЛӖК, ийунӗн 26-мӗш (телефонпа). Елӗкри 1-мӗш суйлав участкинче суйлав пысӑк ҫӗкленӳпе иртет. Суйлавҫӑсем праҫник чухнехи пек илемлӗ тумсемпе участкӑна пыраҫҫӗ. Суйлав участкине лайӑх йӗркеленӗ. Вӑхӑта кућтурӑлӑ иртерме кирлӗ йапаласем пурте пур. Комиҫҫире ӗҫлекенсем суйлавҫӑсене ӑшӑ кӑмӑлпа кӗтсе илеҫҫӗ.

Шӑп 6 сехетре суйлавҫӑсем бӳллетенсене алла илсе сасӑлама тытӑнчӗҫ. 1-мӗш бӳллетене Елӗкри „Большевик" колхоз членӗ, 70 ҫулхи старик, Николай Йегорӑвич Обакӑв йулташ илчӗ. Вӑл хӑйӗн карчӑкӗпе пӗрле пынӑ. Унтан „Звезда" колхоз членӗ 80 ҫулхи Морозӑв йулташ карчӑкӗпе пӗрле суйлав бӳллетенӗсене илсе ҫапла каларӗ:

— Манӑн пӗр ывӑл граждан вӑрҫинче совет влаҫӗшӗн кӗрешсе вилчӗ. Вӗсем кӗрешсе илнӗ совет влаҫӗ ҫирӗпленсе пырат. Акӑ епӗр пайан пур те тивӗҫ правапа усӑ курса, суйлава ҫӗнӗле иртеретпӗр. Епӗ совет влаҫӗн ӗҫӗшӗн тӑрӑшса ӗҫлекенсемщӗн сасӑлатӑп,—тет вӑл.

Вата колхозниксене лашасемпе илсе пыраҫҫӗ тата кайала та лашасемпе ӑсатаҫҫӗ.

Вырӑс Сурӑм йалӗнче

ЕЛӖК. Вырӑс Сурӑм йалӗ пайан ийунӗн 26-мӗшӗнче нихҫанхинчен ир вӑранчӗ. Пилӗк сехет тӗлнеле уйав тумӗ тӑхӑннӑ колхозниксемпе колхозницӑсен тата йединоличниксен ушкӑнӗсем суйлав участкине пухӑнма пуҫларӗҫ.

Суйлав вырӑнти вӑхӑтпа 6 сехетре пуҫланчӗ. Пӗрремӗш бӳллетене „Доброволец" колхозри стаханӑвӗц Александр Соловйов йулташ илчӗ. Соловйов йулташ суйлавран тухнӑ хыҫҫӑн, ҫапла каларӗ:

— Епӗ пайан хамӑн телейлӗ пурнӑҫшӑн сасӑларӑм. Вӑл пурнӑҫа пире коммуниссен партийӗ, Сталин йулташ туса пачӗ.

Суйлав пысӑк хастарлӑхпа пырат. 10 сехет тӗлне участкӑри суйлавҫӑсенчен пӗтӗмӗшпе пекех хӑйсен бӳллетенӗсене суйлав урнисене йанӑ.

Суйлав кунӗ савӑнӑҫлӑ уйав пулса тӑчӗ. Урам тӑрӑх ҫамрӑксен ушкӑнӗсем хуткупӑссемпе, балалайкӑсемпе ҫӳреҫҫӗ. Йурӑсем йурлаҫҫӗ, ташлаҫҫӗ. Суйлав участкинче ташламалли вырӑн тунӑ. Вата колхозницӑ Бочковӑ йулташ суйлавран тухнӑ хыҫҫӑн ҫамрӑксемпе ӑмӑртмала ташласа илчӗ.

Суйлавҫӑсен вӑхӑтне кућтурӑлӑ иртерме пур условисене те тунӑ. Участкӑра кӗнекесем сутаҫҫӗ. Кану пӳлӗмӗнче патефон, радио пур. Вата суйлавҫӑсене лашапа илсе пырса леҫсе хӑвараҫҫӗ.

Йефремӑв.

Трактӑрсемпе комбайнсене йусаса ҫитернӗ

РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсен суйлав кунне Вӑрнар районӗнчи МТСтанци тырпул пухса кӗмели йалхуҫалӑх машинисене пӗтӗмпех йусаса ҫитернипе кӗтсе илчӗ.

МТС-ра 57 трактӑр, 10 комбайн, 29 молотилкӑ тата ытти йалхуҫалӑх машинисене те уй-хир ӗҫӗсене тума хатӗрлесе ҫитернӗ.

МТС-ри трактӑр бригадин бригадирӗ А. Федӑрӑв.

Харькӑври трактӑр савӑчӗ тунӑ газогенератӑрнӑй трактӑр. Ку трактӑр вутӑпа ӗҫлет. Мускаври тата Горькири автосавӑтсен ҫакӑн пек трактӑрсене кӑҫал 1500-шер, 1939 ҫулта—3009-шер туса кӑлараҫҫӗ.

(Сойузфото).



„Геройлӑ екипажа кӗтсе илни"

П. Т. Маљцӗв художник картинӗ,—„Рабочисемпе Хресчӗнсен Хӗрлӗ Ҫарӗ тата Тинӗс-Ҫар Флочӗ XX ҫул тултарни" выстӑвкӑран.

(Сойузфото репродукцийӗ).

Пысӑк хаваслӑхпа иртрӗ

ЕСМӖЛ, ийунӗн 26-мӗшӗ. Пайан уйав. Ӑҫта пахнӑ унта хӗрлӗ йалавсем, ҫулпуҫ сӑнӗсем тата тӗрлӗрен плакатсемпе картинӑсем ҫакӑнса тӑраҫҫӗ. Пайан Ӗсмӗлти „Ударник" колхозри колхозниксем: ваттисем те, ҫамрӑккисем те—пурте пысӑк уйав чухнехи пек капӑр тумланса, суйлав участки ҫуртне патнеле утаҫҫӗ. Пайан вӗсен пӗр шухӑш: Верховнӑй Советсене халӑх ӗҫӗшӗн, Ленин—Сталин партишӗн чунтан тӑрӑшакан ҫынсене суйласси.

Суйлав участки йӑмӑх хӗрлӗ йалавсемпе, тӗрлӗрен плакатсемпе капӑрланса ларат. Урамра хӗрлӗ плошчӗтре ҫамрӑксем футбол вайӑ выљаҫҫӗ. Суйлав участки пӳлӗмӗнче суйлавҫӑсем радио, патефон итлеҫҫӗ. Буфет ӗҫлет. Хӑшӗсем хаҫат-журналсем вулаҫҫӗ, бӳллетенсене йешчӗк ӑшне йараҫҫӗ. Пӗр айккинче суйлав комиҫҫи членӗсем хӗрлӗ хӑмачпа витнӗ вӑрӑм сӗтел ҫинче ларaҫҫӗ, унтан бӳллетенсем илсе уйрӑм пӳлӗмсене кайаҫҫӗ.

Колхозниксем совет ҫӗршывӗнчи чаплӑ, ӗҫре пиҫнӗ, халӑхӑн шанчӑклӑ ывӑл-хӗрсемшӗн—Зойӑ Ананйӗвна Андрейӗвӑ тата Артемий Иванов йулташсемшӗн сасӑларӗҫ.

Ҫидйаков.

Виҫӗ цехӑн ӳсӗмӗ

КАНАШ. Вакунсем йусакан савӑтри виҫӗ цех РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсене суйламалли куна производствӑ планне срукчен тултарнипе кӗтсе илчӗҫ.

Малти вырӑнта хӗрлӗ йалавлӑ тимӗрҫ цехӗ. Вӑл суйлав кунӗ тӗлне ийуњ планне 109 процент тултарнӑ. Ийунӗн 25-мӗшӗнче суйлав йачӗпе пулнӑ сталинла вахтӑна кӗнӗ рабочисем пысӑк рекордлӑ ӳсӗмсем турӗҫ. Йегорушкин йулташ ҫмени пӗр кунхи нормӑна 416 процент тултарнӑ. Тимӗрҫ-стаханӑвӗцсем Купљайӗвпа Дементйӗв йулташсем пӗр кунхи нормӑна 1100 процент тултарса ку таранччен пулнӑ рекордлӑ ӳсӗмрен 200 процент иртернӗ. Мӗнле ӗҫленипе тунӑ-ха ҫакӑн пек чаплӑ ӳсӗмсене? Ку ыйту ҫине тимӗрҫ цехӗн начаљникӗ, инженер-стаханӑвӗц, Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлама тӑратнӑ кандидат Назарӑв йулташ ҫапла каларӗ:

— Цехри рабочисемпе инженерла-техникла работниксем ӗҫсыннисен ҫулпуҫӗ, чи ҫывӑх тус Сталин йулташ Чӑваш АССР Верховнӑй Совет депутатне суйлама килӗшнине ҫав тери пысӑк кӑмӑлпа йышӑнчӗҫ. Ҫакӑ ӗнтӗ плана хӑвӑрттӑн тултарма май паракан пӗрремӗш услови пулса тӑчӗ. Сталин йулташ пирӗн патра суйланма килӗшни рабочисен хастарлӑхне пысӑккӑн ҫӗклерӗ, Сталин йулташ пирӗн патра суйланма килӗшни пире ҫӗнтерӳсемшӗн пӗтӗм тимлӗхпе кӗрешме чӗнекен вӑйхӑват пулса тӑчӗ. Епӗр дисциплинӑна ҫирӗплетрӗмӗр, ӗҫе ҫменӑра 420 минутран кайа мар усӑллӑ ӗҫлес май организацилерӗмӗр.

Йӑвӑҫ каскалакан цех та (начаљникӗ Кисљаков йулташ) плана срукчен тултарнӑ цехсен ретне тӑчӗ. Вӑл суйлав кунӗ тӗлне ийуњри плана 105 процент тултарчӗ. Цехри стаханӑвӗц Борисӑв йулташ сталинла вахтӑна тӑрса ӗҫлесе нормӑна 200 процент ытла тултарчӗ. Цехри рабочисем хӑйсем тунӑ ӳсӗмсене йаланлӑхах ҫирӗплетме пулаҫҫӗ.

Механичӗски цехри токарсем—пӗр тӑвансем Ваҫилий тата Иван Сычов йулташсем нормӑна 280 процент тултарса цехра халиччен пулман ӳсӗм турӗҫ. Ку цехри рабочисемпе инженерла-техникла работниксем суйлав умӗнхи ӑмӑртура виҫҫӗмӗш вырӑн йышӑнчӗҫ.

В. Ластӑчкин.

Лайӑх ӗҫленӗшӗн—премӗ

Енӗшкассинчи „Стрела" аласта ертелӗ (Трак р.) 1938 ҫул пуҫламӗшӗнче Вутланри аласта ертелӗпе социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва тухрӗ. Ӑмӑрту договӑрӗ тӑрӑх ертелсен ҫулталӑкри плана нойабӗрӗн 7-мӗшне тултармала. Ҫак обйазатӗлствӑна „Стрела" ертелӗ ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртсе пырат. Ийунӗн 1-мӗш тӗлне ертел ҫулталӑк планне 56 процент тултарнӑ.

Продукци пахалӑхне лайӑхлатас йенӗпе те чылай ӳсӗмсем тунӑ. Туса кӑларнӑ продукци хисепӗнчен иккӗмӗш сурта кӗрекен продукци 2 процент ҫеҫ.

РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсене суйлас куна хатӗрленнӗ май, ертелти стаханӑвӗцсем хӑйсем лайӑх ӗҫленипе пӗрлех ытти рабочисене те пулӑшаҫҫӗ. Кирил Куҫмин, А. Михайлӑвӑ йулташсем хӑйсен квартӑл планне 137 процент, А. Ҫеменӑвӑ 146 процент тултарнӑ. Ертелти 49 станок плана пӗрмайах тултарса пыраҫҫӗ.

Стаханӑвӗцсен опычӗсене сарас ӗҫре производствӑлӑ канашлусем пысӑк вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Кунта канашлусем йӗркелӗ пулса пыраҫҫӗ.

Ертел членӗсем кану вӑхӑтне кућтурӑлӑ иртереҫҫӗ. Ертел ҫумӗнче музыкӑ кружокӗ пур. Вӑл 1938 ҫулта ертелте тата урӑх ертелсене тухса 13 концерт панӑ. Физкућтурӑ кружокӗ те аван ӗҫлет. Иртнӗ хӗлле кружок йӗлтӗрҫӗсен районри ӑмӑртӑвӗнче пӗрремӗш вырӑн, республикӑри ӑмӑртура иккӗмӗш вырӑн йышӑннӑ. Кружокра хаљхи вӑхӑтра 77 ҫын ГТО значокӗсене илме ҫулахи нормӑсене параҫҫӗ. Пайанхи куна ГТО значокӗсем 5 ҫын, „ГСО" значокӗсене 13 ҫын илнӗ. Нумай пулмаст ертел ҫумӗнче Вӑрҫӑлӑ Турӑсӑрсен Сойузӗн йачейкине организациленӗ.

Чӑвашкућпромсойуз президиумӗ ертел лайӑх ӗҫленине хакласа, ертел правленин председателне Йегорӑв йулташа, производствӑ пуҫлӑхне Куҫмин йулташа, ертел бригадирне, стаханӑвӗцсене: А. Ҫеменӑвӑ, Куҫмин, Федӑрӑвӑ йулташсене премилерӗ.

М. Иашков.

Чечекленет колхозлӑ йал

Ҫак иртнӗ ҫулсенче Асанкасси йалӗнче (Шӑмӑршӑ р.) тӗлӗнмеле улшӑнусем пулчӗҫ. Йалти колхозниксем таса та ҫута, нумай чӳречелӗ пӳртсем туса лартрӗҫ. Йалта улӑм витнӗ ҫурт сем иккӗ анчах йулнӑ, вӗсен хуҫисем те ҫӗнӗ пӳрт лартма хатӗрленеҫҫӗ. Йалхуҫалӑхӗ машинланса пырат. Халӗ ачасем велоҫипедсене курсан тӗлӗнмеҫҫӗ, вӗсем хӑйсем велоҫипедпа чупаҫҫӗ. Йалта 10 велоҫипед пур. Колхозра тӗрлӗ ӗҫсене те машинӑсемпе тӑваҫҫӗ.

Колхоз уйхирне трактӑрсемпе сухалаҫҫӗ, пиҫсе ҫитнӗ тырра комбайнсемпе пухса кӗреҫҫӗ. Кун пек машинӑсем ӗлӗк улпутсен те пулман. Колхоз автомашинӗ йалтан хулана, хуларан йала тӗрлӗрен йапаласем туртарса ҫӳрет.

Колхозниксем тӑрӑшса ӗҫлесе тырпул тухӑҫне ӳстерсех пыраҫҫӗ. 1932 ҫулта вӑтам шутпа гектартан 11 центнӗр тырӑ туса илнӗ пулсан, 1937 ҫулта 19,4 центнӗр туса илчӗ. Халӗ „Йулташ" колхоз Шӑмӑршӑ районӗнче пӗрремӗш вырӑна тухса Пӗтӗм Сойузри йалхуҫалӑх выстӑвкинче тӑма тивӗҫлӗ пулчӗ. Кӑҫал тата вӑйлӑрах тырпул туса илме тӑрӑшаҫҫӗ колхозниксем. Ҫултан ҫулах тӗрекленсе пырат колхоз. 50 ӗне вырнаҫмалӑх вите, 14 тырӑ кӗлечӗ, машинӑсем усрамалли пысӑк сарай, тимӗрҫ лаҫҫи, сушилкӑ, коњухсемпе ӗне сӑвакансене ваљљи пӳрт, пахча-ҫимӗҫсене хума 100 тоннӑ кӗрекен 2 подвал, ҫӑм тапакан тата кӗрпе ҫуракан машинӑ, ҫиларманӗ, вутпа авӑртакан ҫӑнӑх арманӗ тата ыттисем те пур колхозра.

Колхозра хурт-хӑмӑр ӗрчетес ӗҫ те чылай вӑйланнӑ. Колхоз пуҫланнӑ ҫул колхозӑн 2 вӗллӗ ҫеҫ пулнӑ пулсан, халӗ 40 вӗллене ҫитнӗ. Хуртсене хӗлле усрама 100 вӗлле кӗрекен омшаник пур. Колхозӑн 6 ӑратлӑ вӑкӑр, 11 ӑратлӑ така. Выљӑхсене пурне те ӑратлантарса ҫитереҫҫӗ ӗнтӗ.

Йалта шкул пур. Вӗренме ҫул ҫитнӗ ачасем пурте вӗренеҫҫӗ. Колхозӑн 250 ҫын кӗмелӗх клуб, вулав ҫурчӗ, трахпункт, сӗт-ҫу савӑчӗ пур.

Ҫапла чечекленет колхозлӑ йал.

Г. Иванов.

Пуйан пурнӑҫ

ЕЛӖК. Йунтапа йалсоветне кӗрекен Чулкаҫ йалӗнчи Улита Федӑрӑвӑ пуйан та кућтурӑлӑ пурнӑҫпа пурӑнат. Унӑн 8 ача. Вӑл нумай ачалӑ пирки государствӑран ҫулсерен 4000 тенкӗ пулӑшу илет. Ку укҫа-тенкӗпе вӑл ачисене тумлантармалисем, шкулта вӗренмели кӗнекесем, хутсем илсе парат. Унӑн ҫемйин велоҫипед, балалайкӑ, ҫӗвӗ машинӗ тата патефон пур.

Ҫавӑн пекех Йунтапари „Алмаз" колхозри Ирина Матвейӗвӑ та государствӑран виҫҫӗмӗш хут ӗнтӗ 2000 тенкӗ пулӑшу илчӗ.

Г. Никифӑрӑв.

Ҫӗнӗ кадрсем

Улатӑрти хуткупӑссем тӑвакан хапрӑк строителствинче хапрӑкӑн пирвайхи черетне хута кӗртсен ӗҫлеме кирлӗ ҫӗнӗ кадрсене хатӗрлес тӗлӗшпе чылай ӗҫсем тунӑ. Хаљхи вӑхӑтра тӗрлӗ ӗҫсенче ӗҫлеме 150 ҫын вӗрентсе хатӗрлеҫҫӗ.

М.

Шупашкар—РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕнче

Пысăк праçникре

Çулçăллă йăвăçсем хушшипе пырса кĕретĕн Калинин йачĕпе тăракан шкула. Çуртăн тул йенче хĕрлĕ хăмач çине çырнă лозунгсемпе плакатсем, йуратнă çулпуçсен сăнĕсем. Икĕ айккинчи хĕрлĕ йалавсем куçа илĕртсе тăраççĕ. Шала кĕрсен коридор тăрăх ковйор тăсăлса выртать. Йĕри-тавра, стенасем çумĕнче лозунгсем, плакатсем, Политбюро членĕсен—йуратнă çулпуçсен портречĕсем. Иккĕмĕш хутлăха улăхатăн, коридорпа тӳрĕмĕн выртакан пысăк пӳлĕме кĕретĕн. Кунта çурма-çавра лартса тухнă сĕтелсем. Сĕтелсене комиççи членĕсене валли лартса хатĕрленĕ. Сĕтелсем çинче чечексем. Ĕнер касхиех пурте хатĕр пулнă кунта.

Çакăн пек илемлĕ тумпа, питĕ лайăх хатĕрленсе кĕтсе илчĕ хăйĕн суйлавçисене Шупашкар хулинчи 14-мĕш номерлĕ суйлав участки.

Çак пысăк праçник илемĕпе тумланнă çуртра пайан кашнийех чи малтан килсе, хăйĕн сассине коммунисссемпе партире тăманнисен Сталинла блокĕн кандидачĕсемшĕн парса хăйĕн граждăнла пысăк тивĕçлĕхне пурнăçлама тăрăшать. 5 сехет çитмен-ха. Хĕвел тухни те нумай пулмасть. Суйлав участокне малтанхи суйлавçăсем килме те пуçларĕç. Чи малтан Шупашкарти инвалидсен ертелĕнче ĕçлекен Гаврилăв Александр Гаврилăвич йулташ хăйĕн арăмĕпе—Марийа Михайлăвнăпа килчĕ.

— Епĕр,—тет Гаврилăв йулташ,—телейлĕ çемйелĕхсем, хамăра йуратнă партишĕн, Ленин—Сталин партишĕн, коммунисла партин ĕçĕшĕн чĕререн тăрашса ĕçлекен Молăтăвпа Калинкина йулташсемшĕн сасăлама килтĕмĕр. Пирĕн икĕ ача ӳсеççĕ. Хамăрăн телейлĕхшĕн, хамăр ачасен телейлĕхĕшĕн сасăлатпăр пирĕн,—тет вăл суйлав çуртне кĕрес умĕн.

Николай Александрăвич Богатырăв та килсе çитрĕ суйлав участкине. Вăл „Красный металлист" ертелре ĕçлесе пурăннă. Халĕ государствăран пенси илсе тăрать.

— Пайан пысăк праçник, хамăн савăнăçа каласа пама сăмахăм та çитмест манăн. Епĕ пайан чи малтан суйлав участкине килес тесе кĕçĕр çывăрайманăм та, анчах малтан маларах çитекенсем те пулнă,—тет вăл.

Пайан кашнийех суйлав участкине иртерех килсе, пуринчен малтан сасăлама тăрăшать. Ака А. С. Кошеляв та çитрĕ. Вăл 84 çула çитнĕ. Хăйĕн ĕмĕрĕнче Мускавра, Горькире тата ытти хуласенчи хапрăк-савăтсенче те ĕçлесе курнă. Йулашки вăхăтра, 1937 çулччен, Горькири „Хĕрлĕ етна" савăтра ĕçленĕ. Халĕ государствăна пенси парса тăрать. Совет влаçĕ пулнă хыççăн тин телейлĕ пурнăç курнă вăл. Патша самани вăхăтĕнче йĕркелĕн хут та вĕренеймен вăл. Пурĕ те виçĕ çул анчах вĕреннĕ, кун хыççăн „Свяшченнăй историне" лайăх вĕренменшĕн шкултан кăларса йанă.

6 сехет. Комиççи членĕсем хăйсен вырăнĕсенче. Комиççи председателĕ Çеливанăвă йулташ сасăлама пуçланмали çинчен пĕлтерет. Суйлавçăсене сасăлама тытăнма чĕнет. Суйлавçăсем хаваслăн та савăнăçлăн комиççи членĕсем патне пырса, бюллетенсемпе конвертсем илеççĕ.

Чи малтан Кирăв йачĕпе тăракан шкулти преподавател, 34 çул хушши учителре ĕçлекен И. А. Афанасьĕв йулташ бюллетенсене суйлав йешчĕкĕсене йарать.

— Епĕ хамăн граждăнла пысăк тивĕçлĕхе пурнăçларăм, вĕçĕмсĕр савăнатăп çак тивĕçлĕхшĕн,—тет Афанасьĕв.

Ваттисем çеç мар, çамрăк суйлавçăсем те суйлав участкине иртерех килме тăрăшнă. Васильĕва Галина Степанавна 18 çул тултарнă çамрăк хĕр. Вăл коммунальнăй строительства техникумĕнче техник-строител пулма вĕренет. Пĕрремĕш хут суйлава хутшăнса, телейлĕ çамрăклăхшăн, телейлĕ пуласлăхшăн сасăларĕ вăл.

Суйлавçăсен савăнăçĕ пысăк. Вĕсем пайанхи пысăк праçникре тулли кăмăлпа савăнаççĕ. Савăнма та тивĕçлĕ. Вĕсем пайан Сталинăн çывăх соратникĕшĕн, совет правителстви пуçлăхĕшĕн—Вячеслав Михайлăвич Молăтăвшăн тата совет халăхĕн шанчăклă хĕрĕшĕн—Калинкина йулташшăн сасăларĕç.

Троф. Майорăв.

Халиччен курман хастарлăхпа

Ирхине 5 сехет те çитмен-ха. Анчах суйлавçăсем 15-мĕш суйлав участкине пухăнма та пуçларĕç. Ку участка çурчĕ Шупашкарти Садвинтрест совхозĕн кантурĕнче вырнаçнă. Участка хапхине хĕрлĕ йалавсемпе, лозунгсемпе, Сталин йулташ портречĕпе тата Российă Федерацийĕн, Чăваш республикин Верховнăй Совечĕсен депутатне суйлама тăратнă кандидатсен—В. М. Молăтăвпа П. И. Калинкина йулташсен портречĕсемпе илемлетнĕ. Хапхан икĕ йенне çулçăллă йăвăçсем касса лартнă.

Алăкран кĕрсен çулçăллă йăвăç аллейипе участка çуртне патне пыратăн. Килкартине пысăк праçник чухнехи пек тасатса капăрлатнă. Йĕри-тавра хĕрлĕ хăмач йалавсем, çулпуçсен портречĕсем.

Суйлавçăсем 6 сехет çитессе кĕтеççĕ. Татах 20 минут кĕтмелле-ха. Уйччен биллиардла, шашкăла выляççĕ. Патефон çĕнĕ йурăсем йурлать. Хăшĕсем пайан тухнă çĕнĕ хаçатсем вулаççĕ. Теприсем—буфетра.

Ака суйлав участкин комиççийĕ ĕçлекен çурт. Чӳречесем йарийĕх уçса йанă. Чӳречесенчен совхозăн çырла пахчи сарăлса выртни курăнать.

Нумайранпа хавасланса кĕтнĕ вăхăт çывхарса çитет—6 сехет. Суйлав комиççин членĕсем сĕтел хушшине виççĕн вырнаçса лараççĕ. Вĕсен умĕнче суйлавçăсен спискисем, бюллетенсем, конвертсем.

Участкăри суйлав комиççи председателĕ суйлав пуçланни çинчен пĕлтерет. Кандидатсен йатне каласа, сасăлама пуçлама чĕнет.

Суйлавçăсем йĕркелĕн, организациллĕн, пĕрин хыççăн тепри бюллетенсемпе конвертсем илеççĕ те, сасăламали пӳлĕмеле кĕрсе каяççĕ.

Чăваш вăрманпромра ĕçлекен кассирша Зойа Александрăвна Павлăва йулташ никамран малтан суйлав урнисем патне пырса бюллетенсене йарать. Ун хыççăн—унăн аппăшĕ Нина Александрăвна Варенцова, виççĕмĕш—61 çулхи амăшĕ Александра Николаевнă Павлăвă сасăлаççĕ.

Вĕсем виççĕш те сасăлана хыççăн килкартине тухаççĕ те, хăйсен савăнăçĕ çинчен, совет правителствин пуçлăхĕшĕн—Молăтăв йулташшăн тата хула совет председателĕшĕн—Калинкина йулташшăн никамран малтан сасăлама телейĕ пулни çинчен каласа параççĕ.

— Пире пайан анне виçĕ сехетрех тăратрĕ,—савăнăçлăн калать Зойа.—Чи малтан кайса сасăлама васкатăр.

— Пайанхи савăнăçа каласа пама сăмах тупаймастăп,—тет амăшĕ.—Хамăн телейлĕ хĕрĕмсемпе килсе Сталин йулташăн чи сывăх соратникĕсене—Вячеслав Михайлăвич Молăтăвшăн тата Калинкина йулташшăн сасăларăмăр.

Суйлавçăсем вĕçĕмсĕр килсе тăраççĕ. Ака цыгансем—15 çын—колоннăпа, хĕрлĕ йалавпа çитрĕç. Вĕсен ватă амăшĕсене автомашинăпа илсе килчĕç. Пурте сасăласа тухрĕç те, пĕр ватă цыган:

— Сывă пултăр Сталин йулташ!—тесе кăшкăрчĕ.

Суйлавçăсем ĕççынисен аслă çулпуçне Сталин йулташа чысласа алă çупса саламларĕç.

Сасăласа тухсан та суйлавçăсем час саланмаççĕ. Ака цыгансем таша пуçларĕç. Халăх вĕçĕмсĕр савăнать.

Суйлав халиччен курман хастарлăхпа иртет. Участкăри 1.167 суйлавçăран, 9 сехет тĕлне 473 çын сасăланă.

С. Константинăв.

УЛТĂ СЕХЕТ ÇИТСЕН...

Ир... Пайан 4 сехетрех çынсем унтала-кунтала кайнине тĕл пулатăн. Вĕсем пурте суйлав участкине васкаççĕ. Кашнийех урнăна бюллетен малтан йарасшăн.

Ака çиччĕмĕш суйлав участки. Вăл Кулъпромсойуз çуртĕнче вырнаçнă. Кунта пайан ирпе ирех суйлавçăсем пухăннă, чи малтан Ленин йачĕпе тăракан ертелти çĕвĕçĕ Романăв Анатолий, санитарипе гигийенă ларйокĕнче ĕçлекен Татарăв Илйа, килхуçи хĕрарăм Орловă Агнийа, нединститут студентки Йарославцĕвă Женьă 5 сехетрех килсе ларнă. Вĕсем хыççăн суйлав участкине виçĕ минут кайарах çамрăк хĕр Йерофейĕвă Шурă, кăçал вăтам шкул пĕтернĕскер, çитрĕ те:—Татах иртерех килмелеччĕ,—терĕ.

Вăхăт малалах шăвать. Суйлавçăсем татти-сыпписĕр килсе тăраççĕ. Ултă сехет çитесси 5 минут йулчĕ. Сургуч шăтăртатса çунать, суйлав комиççи членĕсем урнăсене пичетлерĕç.

Ака сехет стрелкисем хире-хирĕç тӳрĕ тăчĕç. Шăпах ултă сехет çитрĕ...

Суйлав комиççи председателĕ Чиганайĕв йулташ: Суйлав пуçланнĕ,—тесе пĕлтерчĕ.—Суйлавçăсем йĕркелĕн бюллетенсене илсе кабинăсене каяççĕ. Никамран малтан бюллетене санитарипе гигийенă ларйокĕнче ĕçлекен Татарăв Ильйа Петрович урнăна йачĕ.

Кăçалхи çул суйлавра пĕрремĕш хут хутшăнакан çамрăк хĕр Ваньă Матвейĕвă:

— Епĕ пайан питĕ телейлĕ! Пĕрремĕш хут сасăлатăп, ман пек çамрăксене нихăш патшалăхра та суйлав прави памаççĕ. Пирĕн Совет çĕрĕ çинче анчах çамрăксем суйлав правипе сарлакан усă кураççĕ. Тавтапуç Сталин йулташа, пире çамрăксемшĕн чечекленекен пурнăç туса панăшăн,—тет.

Ака тата ватă карчăк Лагутинă Акулинă Матвейĕвнă çитрĕ.

— Епĕ 73 çула кайрăм, пайан çамрăкланнăн туйăнчĕ, савăнпа та ирех килсе хамăн граждăн тивĕçне пурнăçа кĕртрĕм. Ĕçхалăхĕн шанчăклă ывăл-хĕрĕсемшĕн сасăларăм,—тет вăл. Канмали пӳлĕмре суйлавçăсем шахмăтла выляççĕ, кĕнеке-хаçат вулаççĕ. Унтах тата пĕчĕк ачаллă хĕрарăмсем валли организациленĕ ача пӳлĕмĕнче,—ачасем амăшĕсем суйланă вăхăтра тĕрлĕрен выляммали йапаласемпе выляççĕ.

Суйлавçăсем килнĕ çемĕн килеççĕ. Нагорнăй урамри килхуçи хĕрарăмсем музыкăпа пĕрлешсе йĕркелĕн пычĕç, çавăн пекех йăвăç каскалакан саватра ĕçлекен рабочисем хĕрлĕ хăмачпа капăрлатнă автомашинă çинче хуткупăспа, йурăсем йурласа килчĕç.

Малтанхи пĕр сехет хушшинче 246 суйлавçă суйлавра пулчĕ.

А. Çидурай.

Молăтăвшăн сасăланипе вĕçĕмсĕр савăнатăп

Вячеслав Михайлăвич Молăтăв йулташ ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйланма пирĕн суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшӳ панине пĕлсен вĕçĕмсĕр савăнтăм. Мĕнле савăнмасăр чăтас-ха? Халăхсен çулпуçĕ Сталин тата совет правителстви пуçлăхĕ Молăтăв йулташсем йертсе пынипе епĕр çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ туса малала пыратпăр. Сталинăн çывăх соратникĕ Молăтăв йулташ пирĕн пурнăça, пĕтĕм ĕçхалăхĕн пурнăçне лайăхлатсах пырассишĕн, Совет государствине никама пăхăнмала мар тăвассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет.

Епĕр, Совет çĕршывĕнчи çамрăксем, телейлĕ те савăнăçлă пурнăçпа пурăнатпăр. Пирĕн çĕршыври çамрăксем инженерсемпе техниксем, Хĕрлĕ Çар командирĕсем, лётчиксем, агрономсем тата ытти специалиссем те пулма тĕрлĕрен аслă шкулсенче вĕренеççĕ.

Епĕ пайан В. М. Молăтăв йулташшăн сасăларăм. Сталинăн çывăх соратникĕшĕн— Молăтăв йулташшăн сасăланипе вĕçĕмсĕр савăнатăп. Уншăн сасăланипе пĕрле епĕ тăван коммунисла партишĕн, пĕтĕм тĕнчери халăхсен çулпуçĕшĕн Сталин йулташшăн, коммунисăмшăн сасăларăм.

Чăвашсен йалхуçалăх институчĕн студенчĕ В. И. Иванов.

Сассăм çĕршыв тăрăх йантратăр

Савăнăçлă кун—ийунĕн 26-мĕшĕ çитрĕ. Хĕвел тухни нумайах та пулмасть, епĕ çывăрмастăп, сехет çине хумханулăн пăхса тăратăп. Пилĕк сехет çитсен 11-мĕш номерлĕ суйлав участкине хамăр тăратнă шанчăклăран та шанчăклă кандидатсемшĕн сасăлама тухса утрăм. Суйлав бюллетенĕсене алла илнĕ хыççăн савăннипе куççул тухрĕ, суйлав комиççине те тав тăваймарăм, бюллетенсене йешчĕке йама савăнăçлăн тухса кайрăм.

Урнă патне çитсен хама çамрăк та телейлĕ хĕрарăм пек шутларăм. Кун пек телейлĕ хĕрарăмсем капиталисла çĕршывсенче пулма та пултараймаççĕ. Конвертсене йешчĕке йарса, ун çине чечек çыххиве хурса хăвартăм. Манăн сассăм хытă йанратăр, манăн савăнăç пĕтĕм çĕршыв тăрăх кайтăр.

Мĕншĕн пирĕн савăнмала мар-ха? Халĕ епĕ 52 çула çитрĕм. Совет влаçĕ пулнă хыççăн çеç малтанхи хут çутă пурнăç куртăм. Искусствăпа интересленетĕп. Драмкружока члена кĕтĕм, 16 çул хушши сценă çинче халăха кăмăла каймала выляатăп.

Спаçибă Сталин йулташа пире телейлĕ пурнăç туса панăшăн!

М. И. Успенскайа.

Телей конверчĕ

Çулахи хĕвелĕн ылтăн пайăркисем çĕр çине ӳкме ĕлкĕрмен-ха, çуртсем çийĕнче, йăвăçсем çийĕнче çеç йалкăшаççĕ. Ир пулсан та урамсенче-и, хĕрлĕ площетре-и, учрежденисенче-и—пур çĕрте те савăнăçлăн çĕкленнĕ çынсене куратăн. Пур çĕрте те ĕмĕрлĕхех асра йулакан кун пуçланнине туйатăн. Шăмшак савăнăçпа сӳсенет. Иӳхăшсем самолёт хавартлăхĕпе вĕçеççĕ. Иртнĕ пурнăç çинчен калакан шухăшсене телейлĕ пурнăçăн, малашнехи чаплă пурнăçла ĕмĕтсем çĕнтерсе илеççĕ.

Вăхăт ултă сехете çине сулăнсанах суйлавçăсем суйлав участкисене пухăнма пуçларĕç. Пырасçĕ—ватă, патша самани йăварлăхне тӳссе курнă мучисемпе кинемейсем, пыраççĕ вĕсен ывăл-хĕрĕсем—сталинла хĕвел ăшшинче ӳссе чечекленекен çамрăксем, пыраççĕ рабочисем, инженерсем, техниксем, учителсем, журналиссем, артиссем, музăкçăсем... Кашни хăйĕн ĕмĕчĕсемпе шухăшĕсене конверт ăшне хума васкать.

Конверт. Çак конвертра совет ĕççыннисен тулли ирĕклĕхĕ, нихăçан та никам та çĕнтерейми пĕрлĕхĕ, вăйхăвачĕ. Çак конвертра совет ĕççыннисен малашнехи савăнăçлă пархатарлă пурнăçĕ. Унта ĕçхалăхĕ телейлĕ пурнăçшăн, коммунисен партийĕ халăхсен çулпуçне Сталин йулташа чĕререн кăмăлласа тав туни, çавăнтах иртнĕ çирĕм çул хушшинче совет çĕршывĕ туни, пĕтĕм тĕнчери пролетарисене савăнтаракан çĕнтерӳсем. Ку конверт пирĕн телей конверчĕ. Çавăнпа кашни суйлавçă çав конверта алла илме çĕкленӳпе, савăнăçпа, тулли кăмăлпа васкать.

Ака суйлав урнисем патне аллине конвертсем тытнă Пелагейа Алексейĕвă йулташ пырать. Унăн 63 çул пурăнса пĕркеленнĕ сăнсăпачĕ çинче çамрăклăхри савăнăç выляать. Вăл хăйĕн аллинчи конвертсем ăшне хăйĕн ваталăхĕ пысăк тивĕçре пулнишĕн, халăхи çамрăклăх телейлĕ ирĕклĕхре пулнишĕн Сталин йулташа тав тунине хунă. Алексайĕвă хăйĕн вĕресе тăракан шухăшĕсене чарса тăма пултараймарĕ, хумханса илчĕ те—Сывă пултăр Сталин йулташ!—тесе саламларĕ.

Чаплă уйав

Чăваш халăхĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă пирвайхи кандидатне, халăхсен çулпуçне Сталин йулташа суйлать. Унпа пĕрлех Чăваш АССР Верховнăй Советне унăн соратникĕсене—Молăтăв, Калнин, Каганович, Ворошилăв, Андрейĕв, Микойан, Жданăв, Йежов йулташсене суйлать. Пайан ĕçхалăхĕ хăйĕн телейлĕ пурнăçĕшĕн сасăлать.

Шупашкарти 12-мĕш суйлав участкинчи суйлавçăсем РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандадатшăн—хула совет председателĕ Калинкина йулташшăн, Чăваш АССР Верховной Советне депутата суйлама палăртнă кандидатшăн—Совет правителствин пуçлăхĕ Молăтăв йулташшăн сасăлаççĕ. Ĕçхалăхсемшĕн пайан телейлĕ, савăнăçлă кун.

Пилĕк сехет та çитмен, суйлавçăсем строителсен клубне çитсе тăнă. Кунта шашкă-шахмăт, кĕнеке-хаçат, патефон. Никам та ахаль лармасть. Кĕнеке-хаçат вулаççĕ, патефон итлеççĕ, хăшпĕрисем биллиардла выляççĕ. Суйлавçăсем кĕнĕ çĕртех справкăсем паракан сĕтел. Ачаллă арăмсем валли ачасен пӳлĕмĕ. Ĕçес-çийес тесен буфет пур.

Ултă сехет. Суйлав комиççи хăй вырăнĕнче. Чи малтан Стройтрестра столяр пулса ĕçлекен стахановец Йе. Смолăв йулташ сасăларĕ. Сасăласа тухнă хыççăн вăл çапла каларĕ:

— Епĕ производствăра 34 çул ĕçлетĕп, 11 хут премиленĕ мана. Анчах епĕ пайанхи пек пысăк савăнăç курман. Йепле савăнас мар, йепле хĕпĕртес мар пайан пирĕн чăваш халăхĕн, Сталин йулташ пире çакăн пек пысăк чыс тунăшăн.

Сывă пултăр коммуниссемпе партире тăманнисен никам çĕнтерейми блокĕ!

Сывă пултăр пире телейлĕ те савăнăçлă пурнăç туса паракан Сталин йулташ!

Пĕрин хыççăн тепри сасăлаççĕ. Черет тавраш çук. Суйлав пысăк организациллĕхпе иртет. Кăнтăрла 12 сехет тĕлне 1000 çын ытла сасăланă. Сасăланă хыççăн та суйлавçăсем килĕсене саланмаççĕ. Сасăланă хыççăн вăл тӳрех строителсен сатне тухать.

Сатри сценă çинче суйлавçăсем пионерсен концертне итлеççĕ. Пионерсем те суйлавçăсемпе пĕрле савăнаççĕ. Çамрăксем волейболла выляççĕ.

Пайанхи кун коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла блокĕ çирĕппи, вăл нихăçан çĕмĕрĕлес çукки тата тепĕр хут курăнчĕ. Ийунĕн 26-мĕшĕ пĕтĕм халăхăн праçникĕ, ленинла-сталинла наци политики çĕнтерни чаплă уйавĕ пулса тăчĕ.

П. Перлов.

Чи малтан пынă суйлавçă

Шупашкарти 9-мĕш суйлав участкинчи суйлав пулмалли çурта партипе правителствă руководителĕсен сăнĕсемпе, тĕрлĕрен чечек-курăксемпе илемлетсе капăрлатнă. Суйлавçăсен суйлав пӳлĕмĕсене çемçе кавир тăрăх утса кĕмеле. Сасăламали пӳлĕмсенче чечексем тутлă шăрша сараççĕ.

— Хăш государствăра пур пирĕн çĕршыври пек савăнăçлă пурнăç? Ниçта та! Ийунĕн 26-мĕшĕ—асран кайми кун. Епĕ ирхине 4 сехетре тăтăм. Çак куна тахçантанпах кĕтнĕ. Йуратнă кандидатсемшĕн хамăр участкăра пур суйлавçăсенчен те маларах сасăлас ĕмĕтпе хавхаланса, ирхине 6 сехетре суйлав çуртне кайрăм. П. Калинкинăпа В. Харитонăв йулташсемшĕн чи малтан сасăларăм. Вĕçĕмсĕр савăнтăм,—тесе каласа парать ватă суйлавçă Устинийа Толлопилло йулташ.

Устинийа 60 çулта. Белоруççинче чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Патша саманин йавăр пусмăрĕ унăн кун-çулне чылай хуçнă. Вăл 16 çул хушши помещиксем патĕнче кухаркăра пурăннă. 6 çул хушши пан патĕнче сурăх кĕтӳвĕ кĕтнĕ. Ĕлĕкхи асаплă пурнăçа Устинийа вĕçĕмсĕр ылханать.

Толлопилло йулташ хăйĕн халăхи савăнăçлă та хаваслă пурнăçĕ çине пăхса кăмăл тулли савăнать. Унăн виçĕ ача. Асли—Тимофей—38 çулта. Ленинградри çар медицинă академинчен вĕренсе тухнă. 20 çул хушши ĕнтĕ Хĕрлĕ Çарта пурăнать. Вăталăххи—Клеопатра—34 çулта. Вăл Чăвашгосстрахра инспектăр пулса ĕçлет. Кĕçĕнни—Клавдийа—Мускав облаçĕнче ĕçлет. Çак ачасем çине тата вĕсен телейлĕ кунçулĕ çине пăхса ватă суйлавçă вĕçĕ хĕррисĕр савăнать.

— Ака мĕншĕн епĕ ийунĕн 26-мĕшĕнче пур суйлавçăсенчен те маларах алла бюллетенсем илсе, коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла блок кандидачĕсемшĕн тулли хаваспа, пысăк çĕкленӳпе сасăларăм. Епĕ пуйан та савăнăçлă пурнăçпа пурăнатăп. Çакнашкал пурнăça пире Ленин—Сталин партийĕ пачĕ. Сывă пултăр Сталин йулташ!—тет Устинийа Толлопилло йулташ.

Арк. Нестĕрĕв.

Цыгансен табăрĕнче

Пире—агитатăрсене—Кирăвски посолăка çирĕплетнĕ. Суйлав кампани пуçлансанах епĕр посолăкри суйлавçăсем хушшинче ĕçлеме тытăнтăмăр.

Май уйăхĕнче Шупашкара цыгансен табăрĕ килчĕ. Вĕсем Ворошилăв урамĕн вĕçне çерем çине вырнаçрĕç.

Кайрăмăр цыгансен табăрне. Вĕсем мĕнле пурăннипе интересленетĕмĕр. Цыгансем агитатăрсене йăшă кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Епĕр вĕсене пĕр çĕре пухрăмăр та, Пушкинăн „Цыганы" поемине вуласа патăмăр. Цыгансене ку питех те килĕшрĕ.

Цыгансем пире кашни кунах пыма чĕнеççĕ. Виçĕ агитатăр цыгансем хушшинче ĕçлеме пуçларăмăр. Вĕсене суйлавçăсен спискине кĕртни çинчен ыйтса пĕлтĕмĕр. Хула советĕнчен цыгансем патне никам та пырса пăхман иккен, вĕсене суйлавçăсен списăкне кĕртмесĕр сиктерсе хăварнă.

Малалахи занятисенче РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Паложенине вĕрентрĕмĕр, капиталисăмлă çĕршывсенчи суйлав çистемипе паллаштартăмăр.

Унтан кандидатсем çинчен агитацилерĕмĕр. Совет Сойузĕнчи событисем çинчен, тĕнчери лару-тăру çинчен, Сталин йулташ йертсе пыракан совет халăхĕ йепле телейлĕ пурнăç туни çинчен каласа патăмăр.

Большевикла агитаци хăйĕн ĕçне турĕ. Ĕнер, ийунĕн 26 мĕшĕнче, цыгансен табăрĕнчи суйлавçăсем, пурте пĕр çын пек кар тăрса, хĕрлĕ йалавсемпе 15-мĕш участкăна пырса сасăларĕç. Бюллетенсене суйлав урнисене йанă хыççăн, хăйсен, цыгансен ташшипе халăха телентерчĕç. Вĕсем Совет влаçĕ цыгансене тулли правалă телейлĕ пурнăç туса панăшăн хĕпĕртесе, коммуниссен партишĕн, Совет влаçĕшĕн, халăхсен йуратнă та хаклă çулпуçĕшĕн—Сталин йулташшăн сасăларĕç.

Агитатăр Гр. Аверйанăв.

Епĕр пайан ку вăхăта çывăрмасăр кĕтнĕ

Ирхине, 5 сехет иртсен, Шупашкарти 5-мĕш номерлĕ шкул çуртне халăх пухăнма пуçларĕ. Кунта пĕрремĕш номерлĕ суйлав участки вырнаçнă. „Ыра сунса кĕтетпĕр"—тесе çырса çакнă шкул умне. Шкула хĕрлĕ йалавсемпе, лозунгсемпе, партипе правителства руководителĕсен портречĕсемпе илемлетнĕ. Çавăн пекех кашни суйлавçă хăйĕн килĕ умне хĕрлĕ йалавсем тухса çакнă. Ватă карчăксене, стариксене участкă çумне йатарласа çирĕплетнĕ автомашинсемпе илсе пыраççĕ.

Суйлав комиççи суйлавçăсем сасă пама тытăначчен кирлĕ ĕçсене пурне те туса çитернĕ. Суйлав йешчĕкне тĕрĕслесе тухса, сургучласа пичетлесе питĕрсе хучĕç.

Вăхăт ултă сехет. Суйлав йешчĕкне пичетленĕ хыççăн, суйлав комиççи суйлав пуçланни çинчен пĕлтерчĕ. Суйлавçăсене бюллетенсемпе конвертсем пама тытăнчĕç. Суйлавçă—кабинăра. Ун умĕнче кăранташ, конверта йĕпетме шыв. Бюллетенсем паракан сĕтел умне 55 çулхи Михаил Иванăвич Калинин хăйĕн арăмĕпе—Пераськовйа Иванăвнăпа пырса тăчĕ. Кĕсйинчен шурă тутăрпа чĕркенĕ паспăрчĕсене кăларса, вĕсем суйлав комиççи секретарне кăтартрĕç. Бюллетенсене суйлав йешчĕкне йанă хыççăн ташласа йурласа савăнакан çĕре пырса тăчĕç.

— Епĕр пайан ку вăхăта çывăрмасăр кĕтнĕ. Халĕ епĕр Сталинла Конституци тăрăх РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене хамăр пĕлсе, шанчăклă, халăх интересне сыхлама пултаракан çынсемшĕн сасăлатпăр. Епĕр суйлама палăртнă кандидатсем халăхăн чи шанчăклă ывăл-хĕрĕсем—теççĕ вĕсем арăмĕпе иккĕшĕ те.

Суйлавçăсен вăхăтне усăллă иртерме хаçат-журналсем, патефон, шашкă-шахмăт, домино, биллиард пур. Радио кĕрлет. Кунта врачсен пӳлĕмĕ т. ыт. те пур.

Суйлавçăсен чĕри Сталин ĕçĕшĕн, социалисăмшăн шанчăклăн та çине тăрса кĕрешекенсемшĕн сасăлас ĕмĕтпе тулнă. Кашни хăйĕн сассине коммуниссемпе партире тăманнисем пĕрле тăратнă кандидатсемшĕн парассине пĕлет. Çавăнпа та вăл кунта ирех хăйĕн тивĕçне пама килнĕ.

М. Йакăвлĕв.

Ваттисен савăнăçĕ

ШУПАШКАР ХУЛИНЧИ 9-мĕш номерлĕ суйлав участки пилĕк сехетрех суйлавçăсемпе тулнă. Пурте вĕсем пĕр шухăшпа—пĕрремĕш бюллетен илсе никамран малтан хăйсен чи пысăк тивĕçлĕхне пурнăçа кĕртме килнĕ.

54 çулхи Софийа Петровнă пайан 4 сехет иртсенех участкăна килнĕ. Вăл бюллетенсем илме те пĕрремĕш кĕчĕ.

— Спаçибă, тем чухлĕ пысăк спаçибă çак телейлĕ пурнăça туса паракансене. Пайан епĕ çĕршывăн мухтавлă çыннисемшĕн—Калинкинăпа Харитонăв йулташсемшĕн сасăларăм,—терĕ Петрова йулташ суйлав учасикинчен тухсан.—Ватлăхра савăнса пурăнатăп, телейлĕ пултăм. Мĕншĕн савăнас мар-ха? Ака, епĕр упăшкапа иксĕмĕр те ĕçлеместпĕр пулин те, пирĕн пурнăç тулăх. Ывăлăм манăн профессăр, кинĕм—тухтăр. Ĕлĕкхи саманара пулсан йалти шкулта та вĕренеймен пулĕччĕç. Епĕ хамах нимĕн те вĕренмен. Çемйе пысăк пулнă, çиме çитмен,—тет Петрова ĕлĕкхи хĕн-хурлă пурнăçпа халĕхи телейлĕ, пуйан пурнăça танлаштарса.

— Суйлав участкине епĕр 5 сехетрех килтĕмĕр. Чылай кĕтнĕччĕ ку чаплă уйава,—тет авторемонтнăй мастерскойĕнчи рабочи Йефрем Кривăв йулташ.

— Пурăнма та ĕçлеме те савăк. Ачасем пурте вĕренеççĕ. Аслă ывăл Луша 8-мĕш класа вĕренме куçрĕ, Стопă—6-мĕш класра, Тамара—4-мĕш класра вĕренеççĕ, Васă кăçал пĕрремĕш класа вĕренме кайать. Пĕтĕм çемйе пирĕн пайан пысăк уйава чыслать,—тет Кривăв йулташ арăмĕ Агашă.

* * *

Суйлава пыракансем пурте савăнăçлă, хаваслă. Суйлав участкинче те вĕсене ăшшăн кĕтсе илеççĕ. Кĕнеке-хаçат вуламали, шашкă-шахмăтла, биллиардла выляммали пӳлĕмсем пур. Унтах духовой оркестр, патефон, радио. Килкартинче волейболла выляççĕ. Пĕчĕк ачасем валли йатарласах йаслĕ организациленĕ.

Х. Л.

Пĕтĕм халăх уйавĕ

ТАШКЕНТ, ийунĕн 25-мĕш. (ТАСС). Каçхине суйлав участкисене кăнтăрла сасăлама ĕлкĕреймennисем пĕчченшерĕн çеç пынă пулсан та, унта мĕн тĕттĕм пулаччен çынсем пит нумай пулнă.

Коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсемшĕн сасăласси пит те чаплăн тата организацилĕн иртнĕ.

Фергана хулинчи Сталински суйлав округĕнче рабочисем, Хĕрлĕ Çар бойецĕсемпе командирсем, колхозниксем, вырăнти интеллигенци пурте пĕр шухăшлăн пулса Вăтам Ази çар округĕнчи çарсен командуйушчин И. Р. Апанасенко йулташ кандидатуришĕн сасăланă.

Катартаљски округра Верховнăй Совет депутатне суйланма иккĕмĕш Калинински МТС-нчи мастерской пуçлăхĕ Берды Турдийĕв йулташ килĕшÿ панă. 5-мĕш номĕрлĕ участкăра суйлавçăсем сасăлама пуçлаччен чылай малтан пынă. Çамрăксем йурăсем йурланă.

Колхозсенчи пиншер звеносемпе бригадăсем историлĕ куна—ийунĕн 24-мĕшне—стахановла рекордсемпе паллă тунă.

Нумай колхозсем суйлав кунхине каçхи апатлану организацилене. Сĕтелсем çине тĕрлĕрен апат-çимĕçсем лартса тултарнă. Пур çĕрте те—абрикоссемпе персиксем. Кăçал вĕсем пит лайăх ăнса пулнă. Ленинскра суйлавçăсене Ленин йачĕпе тăракан колхозпа „Янги-Кадам" колхоз апатлантарнă.

Хуласенчи тата кишлаксенчи парксенче халăхсем вăхăта пит савăнăçлă иртернĕ. Андижанра, Йежов йачĕпе тăракан парка 40 пин çын пынă, Шверник йачĕпе тăракан парка—10 пин çын. Вырăнти театрсенчи акторсем çурçĕр иртиччен выљанă, художествăлă пултарулăх концерчĕсем лартса кăтартнă.

Коканд урамĕсем тăрăх кунĕпех автомашинăсем тата йалтан килнĕ колхозниксене лартса çÿрекен арбасем вĕçĕмсĕр нумай çÿренĕ.

Хуласемпе кишлаксенчи урамсенче праçник чухнехи пек уйав çурçĕр иртиччен пынă.

Коммуниссемпе партире тăманнисен пĕтĕм халăх блокĕ тунă чаплă çĕнтерÿ

Азербайджан СС Республикĕн Верховнăй Совтне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп суйлав комиççи председателĕпе Адигезал-Халил оглы Гезалăв йулташпа калаçни

Азербайджан СС Республикĕн Верховнăй Совтне суйламали кун—ийунĕн 24-мĕшĕ—чăннипех те пĕтĕм халăхăн чаплă та паллă кунĕ пулчĕ. Пур çĕрте те—хуласемпе йалсенче те, колхозсемпе совхозсенче те, çÿлĕ тусенче çуллахи вăхăтра кĕтÿ çÿрекен вырăнсенче те, тинĕссемпе йуханшывсенче çÿрекен пăрахутсем çинче те, пуйăссем çинче те, Хĕрлĕ Çар чаçĕсенче те, чикĕ хĕрринчи заставăсенче те,—халăх коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсемшĕн пысăк хаваслăхпа сасăларĕ. Халăх хушшинче политикăлă активлăх калама çук пысăк паларчĕ. Суйлав участкисенче пуринче те тенĕ пекех суйлавçăсем 100 процентчĕпех сасăланă.

Бакури Ленински суйлав округĕнче, Сталин йулташ баллотировкăна тăнă çĕрте, ийунĕн 24-мĕшĕнче чăннипех те халăх праçникĕ пулнă. Суйлав йешчĕкĕсем патне капăр тумланнă суйлавçăсем, тĕрлĕ чечексен çыххисем йатса вĕçĕ-хĕрисĕр пынă.

Азербайджан ССР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш депутатне пурте пĕр шухăшлăн пулса, суйлавçăсем 100 процентчĕпех пырса Баку хулинчи 56-мĕш номĕрлĕ Ленински суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăнă Иосиф Виссарионăвич Сталина суйланă.

Республикăн Верховнăй Совет депутачĕсене пурте пĕр шухăшлăн пулса, Баку хулинчи суйлав округĕсем тăрăх депутата суйланма баллотировкăна тăнă Вйачеслав Михайлăвич Молăтăва, Лазарь Моиçейĕвич Кагановича, Анастас Иванăвич Микойана, Андрей Александрăвич Жданăва, Николай Иванăвич Йежова, Лаврентий Павлăвич Берийа суйланă.

Азербайджанăн чĕре тулли кăмăлпа савăнакан халăхĕ аслă Сталиншăн, унăн чаплă соратникĕсемшĕн, тăван çĕршывăн шанчăклă ывăлĕсемпе хĕрĕсемшĕн—коммуниссемпе партире тăманнисен никам çĕмĕреймен сталинла блок кандидачĕсемшĕн пысăк хаваслăхпа сасăларĕ.

Хăйĕн Верховнăй Совтне суйласа совет Азербайджан халăхĕсем хăйсен моральлĕ тата политикăлă пĕрлĕхĕ никам çĕмĕреймен вăй пулса тăнине, Ленин—Сталин партине, Азербайджан халăхĕн аслă тусне—Сталин йулташа вĕçĕмсĕр йуратса тăнине татах та тепĕр хут демонстрацилесе пачĕç.

(ТАСС).

Сталинла блокăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕ

СТАЛИНАБАД, ийунĕн 25-мĕш. Ĕнер Таджикистанри ĕççыннисем хăйсен государствă влаçĕн Верховнăй органне калама çук пысăк çĕкленÿпе, хавхаланса суйланă. Республикă столицине—Сталинабада чаплăн илемлетнĕ. Таджик СС Республикĕн Верховнăй Совтне депутата суйланма Иосиф Виссарионăвич Сталин йулташ тата унăн çывăх соратникĕсем—В. М. Молăтăвпа Л. М. Каганович йулташсем баллотировкăна тăнă суйлав округĕсенче уйрăмăнах хаваслă, уйрăмăнах вăйлă хусканулă.

Ирхине, шăп ултă сехетре, суйлав участкисен алăкĕсем уçăлаççĕ. Сасăлама пуçлас вăхăта тÿсеймесĕр кĕтсе тăнă çĕршер ĕççыннисем суйлав йешчĕкĕсем патне, хăйсен шухăшĕ кăмăлне кăтартса памашкăн республикăн Верховнăй Совет депутачĕсене суйламашкăн хаваслăн утса пыраççĕ.

Сталински суйлав округне кĕрекен, пурçăн хапрăкĕн территоринче вырнаçса тăракан суйлав участкинче пуринчен те малтан хапрăкри стахановкă Таужинор Турсунбайĕвă сасăлат. Хăйĕн бÿллетенне йешчĕке йарсасăн, вăл хăйĕн телейĕ çинчен — Сталинла Конституцине тăваканшăн сасăлас пысăк телей çинчен, таджик ĕççыннисене телейлĕ те хаваслă пурнăç туса панă çыншăн, Сталин йулташшăн сасăлас телей çинчен калат.

Молăтăв йулташ баллотировкăна тăнă Сталинабадри Ленински суйлăв округĕнчи Коммунистичĕски участкăна Сталинабад гарнизонĕнчи командирсен арăмĕсем организацилĕн оркестрпа пыраççĕ.

Сталинабадри Красноармейски суйлав округĕнче те суйлавсем çавăн пекех хаваслăн, пĕр çын пек организацилĕн иртнĕ,—унта йăвăр промышлĕннăçпа транспăртăн мухтавлă халăх комиссарĕ Лазарь Моиçейĕвич баллотировкăна тăнă.

Суйлав комиççисем пур çĕрте те лайăх организацилĕн ĕçленĕ.

Вăта тата инçетре пурăнакан суйлавçăсене участкăсене автомобилсемпе илсе пырса тăнă.

(ТАСС).

Громăв, Йумашĕв тата Данилин йулташсене Пĕтĕм тĕнчери авиаци федерацийĕн медалĕсене парса наградăланă

Ийунĕн 24-мĕшĕнче Берлинра Пĕтĕм тĕнчери авиаци федерацийĕн 38-мĕш конференцийĕ уçăлнă. Конференцине уçнă çĕрте дипломати корпус членĕсем тата çар аташисем пулнă.

Федераци Совечĕн ĕçĕсем çинчен доклад тунă хыççăн паллă љотчиксене медальсем панă. Данильотчицине Батене медаль панă хыççăн, федерацин генеральнăй çекретарĕ совет љотчикĕсене—Громăв, Йумашĕв тата Данилин йулташсене наградăсем парса парнелени çинчен каласа пĕлтернĕ. Пĕтĕм зал ала çупса Громăв, Йумашĕв тата Данилин йулташсене медальсем панă. (ТАСС).

Кĕскен

** ПАРИЖ, ийунĕн 22-мĕш. Гавас агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Германи полицийĕ Берлинра Франци хаçачĕсене, „Тан" хаçатсăр пуçне, пурне те арĕсленĕ. Агентства сăмахĕсем тăрăх, хаçатсене мĕнле сăлтавпа арĕслени паллă мар.

** ЛОНДОН, ийунĕн 22-мĕш. Рейтер агентствин корреспонденчĕ Мальта утравĕ çинчен пĕлтернĕ тăрăх, ийунĕн 21-мĕшĕнче Мальта утравĕ çине Италирен ескадра пынă. Ескадрăра икĕ броненосец тата тăвата есминец.

Йулашки вуникĕ çул хушшинче Италин çар карапĕсем Мальта утравĕ çине малтанхи хут пынă.

(ТАСС).

Пайан, 1938 çулти ийунĕн 27-мĕшĕнче, вырăссен паллă писателĕ Владимир Галлактионăвич Короленко çуралнăранпа 85 çул тултарчĕ.

ÿКЕРЧĔК СИНЧЕ: ВЛАДИМИР ГАЛЛАКТИОНĂВИЧ КОРОЛЕНКО (1853—1921 çулсем).

Пĕтĕм халăх савăнăçĕпе хаваслăхĕ

РСФСР-ти, Украинăпа Белоруçси СС Республикĕсенчи халăхсем совет патриотисăмĕн пĕр туйăмĕпе хăйсен республикĕсен Верховнăй Совечĕсене суйламали куна тĕлĕнмеле пысăк çĕкленÿпе кĕтсе илеççĕ. Ĕççыннисем суйлава пĕтĕм халăх праçникĕ тунипе паллă тăваççĕ. Савăнăçпа хаваслăх хумĕ кашни хуларах, кашни йалтах паларат.

Промышлĕннăç предприйатийĕсенче, колхозлă хирсенче, транспăртра суйлав умĕн сарса йанă социалисăмлă ăмăртун вучĕсем çутăран та çутăн йалкăшаççĕ.

Мускаври Молăтăвски районĕнчи государствă промышлĕннăçĕнчи рабочисем, РСФСР Верховнăй Совет суйлавĕсене хатĕрленсе, çурçуллăх производствăлă программăна ийунĕн 25-мĕшне тултарма хăйсем çине обйазательства илнĕ. Çак обйазательствăна срукченех пурнăçа кĕртнĕ. Çурçуллăх плана ийунĕн 25-мĕшне 100,3 процент тултарнă.

Донбасри малта пыракан шахтăсенчи горњаксем кăмрăк кăлармалли çурçуллăх программăна тултарнă, планран иртерсе татах çĕршер тоннă кăмрăк параççĕ. „Артемуголь" трестĕн Калинин йачĕпе тăракан шахти ийунĕн 23-мĕшне 311.500 тоннă кăмрăк панă. Киреййевски рудникĕнчи горњаксем (Тулă облăçĕ), суйлав умĕнхи ăмăртăва сарса йарса, рудана халиччен пулманла нумай кăларма пуçланă. Панински карйер куллеnех 1.160 тоннă вырăнне 2.400 тоннă руда парат.

Иванăври текстильщиксем те пысăк çитĕнÿсем тунă. Ново-Иванăври мануфактурă хапрăкĕнчи ткачсем çурçуллăх программăна срукченех—ийунĕн 23-мĕшĕ тĕлне тултарнă. Çурçуллăх пĕтеччен вĕсем планран иртерсе татах 360 пин метр пир-авăр туса кăлараççĕ.

Суйлав кунне колхозниксем производствăлă пысăк çĕнтерÿсемпе кĕтсе илеççĕ. Куйбышĕв облăçĕнчи, Подбельски районĕнчи колхозниксем çĕртме сухине иртнĕ çулхинчен пĕр уйăх малтан пĕтернĕ тата тулă калчисене пурне те тенĕ пекех çумкурăксенчен тасатнă. Суйлав умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, Удмурт АСС Республикĕнчи Йарски МТС-ĕ тырпулсене пухса кĕртмели хатĕрсене йалтах йусаса пĕтернĕ.

Харькăв облăçĕнчи нумай колхозсем Украинă СС Республикĕн Верховнăй Совтне суйламали кун тĕлне електростанцисем лартаççĕ. Золочĕвă район центрĕнче суйлав кунĕ В. И. Ленин памйатникĕ уçаççĕ. (ТАСС).

Совет футболисĕсен чаплă çĕнтерĕвĕ

Ийунĕн 24-мĕшĕнче Парижре „Буфало" стадионра Мускаври „Торпедо" командипе Чехословакири Аусиг хулинчи рабочисен сборнăй команди хушшинче матч пулса иртнĕ. Курма пыракансем пит нумай пулнă, вĕсем совет футболисĕсен выступленине çав тери хыттăн кĕтнĕ.

Матч москвичсем атакă тунипе пуçланнă. Вăйă пуçлансан 10 минут хушши выљасан, совет футболисĕсем Чехословаки алăкĕсене виçĕ мечĕк кĕртсе йанă.

Малтанхи мечĕке Степанăв кĕртсе йанă, иккĕмĕшне—Каричĕв, виççĕмĕшне—каллех Степанăв кĕртсе йанă, вăл çав матчра пысăк маçтăрлăхпа выљанă.

Чехослăваки команди, москвичсен тактикипе хăвăртлăхне кăштах пĕлсе çитсен, активлăн выљама пуçланă, тапхăран питех те хыттăн тапăннă. Анчах „Торпедо" алăкĕсене кĕме хăтланни ăнăçлăн пулман.

Совет команди матча 8 : 0 шутпа выљаса илнĕ, çаксенчен Степанăв хăй пĕччен 5 гол тапса кĕртнĕ, 2 гол—Федотăв тата 1—Каричĕв.

Матчра пулнисем пурте пĕр шухăшлăн пулса совет футболисĕсен маçтăрлăхĕпе чаплă вăййине палăртнă.

(ТАСС).

Изаи йачĕпе иртекен конкурсра пулнисем тăван çĕршыва таврăннă

Совет искусствин мухтавлă представителĕсем—Емил Гилельс, Йакăв Флиер, Исаак Михновский, Павел Çеребрйаков, профессăр Фейнберг 46 кун хушши йут çĕршывра пулнă хыççăн, ийунĕн 25-мĕшĕнче тăван çĕршыва таврăннă. Негорелойе станцинче çамрăк пианиссене кĕтсе илме çывăхри колхозсенчи колхозниксем, чукунçул çинчи работниксем, чикĕ хĕрринчи йалта пурăнакан халăхсем пуçтараннă.

Пограничниксемпе чикĕ хĕрринчи йал çыннисем вакзалта пианиссен пĕтĕм тĕнчери конкурсĕнче çĕнтернĕ çамрăк пианиссене калама çук ăшшăн кĕтсе илнĕ. Совет мухтавлă пианисĕсене Гаљкевич пограничник саламланă. Отвèтлă сăмах конкурсра çĕнтерекен Емил Гилельс тухса каланă.

2.000 тенкĕлĕх хаçат сарчĕ

КАНАШ. Вакунсем йусакан саватри И. С. Фомин йулташ хаçат-журнал сарас тĕлĕшпе уполномоченнăй пулса нумайранпа ĕçлет ĕнтĕ. Саватри подписчиксем хаçат-журналсене йалапах вăхăтра тата йĕркелĕ илсе тăраççĕ.

Фомин йулташ ийуль уйăхĕшĕн саватри рабочисемпе служащисем хушшинче 2.000 тĕнкĕлĕх хаçат-журнал сарчĕ.

Д. Иванов.

ПОЛЬШАРА

Лодзь хули—çуклăхпа чир-чĕрсен тĕп вырăнĕ пулса тăрат

ВАРШАВĂ. Çар министерствин органĕ — „Польска збройна" хаçат Лодзьри рабочисен начар пурнăçĕ çинчен çырнă статйа пичетлесе кăларнă. Лодзь хули—вăл Польшăн промышлĕннăçлă тĕп центрĕ пулса тăрат. Хаçат çапла çырат:

„Лодзь хули тĕксĕмĕн курăнса ларат: варланчăк çуртсем, путăк-шăтăклă урамсем, усал шăршă кĕрекен канавсем, чарăна-чарăна ларса ĕçлекен хапрăксем, тротуарсем çинче хăрма пуçланă йăваçсем. Лодзь вăл,—унта рабочисем йышлăн пурăнаççĕ, вĕсем темиçе вуншар çулсем хушши чăтма çук начар условисенче тата капиталиссем хыттăн експлоатациленине тÿссе пурăнаççĕ,—çуклăхпа чир-чĕрсен тĕп вырăнĕ пулса тăрат. Пайанхи куна Лодзь хули чахоткă чирĕпе чирлекенсен хули пулса тăнипе, сикекен усал чирсемпе професçилĕ чирсем калама çук сарăлнă хула пулса тăнипе паларса тăрат...

Лодзь хулинче чирлĕ çынсемсĕр пĕр хватер те çук.

Лодзьри пурăнмали пĕтĕм çуртсенче 70 процентчĕ—пĕр пÿлĕмлĕ таса мар, тĕттĕм хватерсем шутланаççĕ".

Малала „Польска збройна" хаçат уйрăмах вакă тата вăтам йышши пир-авăр промышлĕннăçĕнчи рабочисен йăвăр пурнăçне кăтартса çырат. «Çав пир-авăр хапрăкĕсенче,—çырат хаçат,—ĕçлекен рабочисем кăшт ĕçлесе илесшĕн талăкра 12-шер сехет... йе унтан та ытларах ĕçлеççĕ, тасалăх йенчен илсен, вĕсен условийĕсем питех те начар».

Хаçат çапла паллă туса çырат: ытлашши йăвăр условисенче ĕçленипе тата ĕçленĕ çĕрте инкек-синкек пуласран сыхланас тĕлĕшпе нимĕн те туманнипе Польшăра çулсеренех çав тĕрлĕ инкек-синкексем пулнипе 900 рабочи вилет, 20 пин аманат, 10 пин рабочисем ĕçе йурăхсăр пулса йулаççĕ. „Лодзь вăл,—паллă тăват хаçат,—çав трагедилĕ статистикă тĕлĕшпе пĕрремĕш вырăнта тăрат".

(ТАСС).

Германи шпионĕсем—Америкăра

НЬЙУ-ЙОРК, ийунĕн 25-мĕш. Ньйу-Йорк штатĕнчи саккун кăларакан собрани Комиççин (Германи фашисĕсем Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенче мĕн ĕçленине тĕрĕслес тĕлĕшпе ĕçлекен комиççи) ларăвĕ вăхĕтĕнче „Америкă-Германи сойузĕн" пуçлăхĕ Фриц Кун, вăл сойуз Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсене фашисла тăрăшни çинчен чăрсарланса уççăн каланă. „Америкă-Германи сойузĕн," тенĕ Кун, Америкăри Перлешÿлĕ Штатсенчи пысăк хуласенче 94 отделени пур, çуллахи лагĕрсем 22 тата вăл сойуз 4 хаçат кăларса тăрат. „Америкă-Германи сойузĕпе" çывăх тăракан чылай организацисем пур, вĕсем фашисла пропагандă сараççĕ. Кун каланă тăрăх, вăл хăй Германирен 1923 çулта тухса кайнă. 1933 çулта Кун Америкă гражданĕсен шутне куçнă. 1936 çулта пуçласа вăл Германин „Çĕнĕ Германи тусĕсем" йатлă фашисла организацин председателĕ пулса тăрат. Унччен çак организацин председателĕ Грибль, хаљ Германин шпионла центрĕ ĕçĕпе айăпланакансккер пулнă. Грибль хальхи вăхăтра судран пытанса Германийе тухса тарнă. Кун „Çĕнĕ Германи тусĕсем" йатлă организацине „Америкă-Германи сойузĕ" тесе йат панă, вăл çав сойузăн „фÿрере" пулса тăрат. Кунăн 1936 çулта август уйăхĕнче Берлинра пулнă чухне çав организацин ытти тăвата руководителĕпе тата Гитлĕрпа пĕрле фотографи тунă ÿкерчĕкĕ пур. Çав ÿкерчĕк чăнах та тĕрĕс, тесе çирĕплетнĕ Кун.

(ТАСС).

Франци компартийĕн çĕнтерĕвĕ

Францири коммуниссем Рÿей хулинче (Парижрен инçех мар) муниципалитетсен тепĕр хут тунă суйлавĕсенче чаплă çĕнтерÿ тунă. Коммуниссен списăкĕ 2.815 сасă илнĕ, реакцилĕ списăк 2.415 сасă кăна илнĕ. Рÿей хулин муниципаллă Совечĕн 27 членĕнчен 15 членĕ халĕ ĕнтĕ коммуниссем пулса тăраççĕ, кунччен малтан унта 2 коммунис çеç пулнă.

(ТАСС).

Асаплантарса вĕлернĕ

Ийунĕн 24-мĕшĕнче Берлинра Генрих Менца асаплантарса вĕлернĕ, ăна „государствă стройне хирĕç тăнă" тесе айăпланă.

(ТАСС).

Редакци пирĕн çине тÿнтерле пăхат

(Красноармейĕц çырăвĕ)

Елĕк районĕнчи „Колхоз хаçачĕ" хаçата илсен, епĕр, Елĕк районĕнчен килнĕ красноармейĕцсем, пĕрле пухăнса кашни статйинех вуласа тухатпăр. Пире тăван чĕлхĕпе çырнă хаçатсем питĕ интереслентереççĕ. Хаçатсенче чăваш красноармейĕцсен çырăвĕсем пулсан, тата та кăмăла кайат. „Колхоз çулĕпе" (Çĕрпÿ р.) хаçатра ун пек статйасем чылай тĕл пулаççĕ. Анчах „Колхоз хаçачĕ" (Елĕк р.) хаçатра пĕр красноармейĕц çырăвĕ те пичетленсе тухнине курма çук. Çакна илтсен: „Пирĕн редакцине красноармейĕцсен çырăвĕсем килмеççĕ", теме пултарĕ ку хаçатăн редакторĕ Кураљов йулташ. Ку тĕрĕс мар. Редакцине красноармейĕцсен çырăвĕсем пыраççĕ. Анчах редакци темĕншĕн вăл çырусемпе интересленмест. Акă, тĕслĕхсем. Епĕ допризывниксем лайăх вĕренни, политзанятисенче вĕренни, тĕрлĕрен кружоксене хутшăнни, çар техникипе малтанах интересленни тата ытти те Хĕрлĕ Çарта питĕ пысăк усă пани çинчен „Колхоз хаçачĕ" редакцине çыру йатăм. Апрел уйăхĕнче чăваш красноармейĕцсем вĕренÿре мĕнле ÿссе пыни çинчен, политикăна, техникăна вĕренес тĕлĕшпе мĕнле тĕслĕхсем кăтартса пыни çинчен, нацилĕ туслăх çирĕпленсе пыни çинчен, кану вăхăтне мĕнле иртерни çинчен çырса йатăм.

Анчах редакци ман çырусемпе мĕншĕн усă курма май килменни çинчен пĕр сăмах та пĕлтермерĕ. Вуласа пăхмасăрах архива йачĕç пулмала пирĕн çырусене.

Красноармейĕц П. Йакăвлĕв.

Инçет-Хĕвелтухăç.

Çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленет

Вырăскас Пикшихри (Канаш р.) туллимар вăтам шкул çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленме тытăнчĕ. Халĕ шкул кăмакасене йусаттарчĕ, çĕнĕрен партăсем илчĕ тата вĕренÿре кирлĕ хатĕрсене (ручкă, кăранташ, тетрадсем, учебник) çителĕклĕ туйанчĕ.

А. Медведĕв.

Пулни-иртнисем

КĂСЙЕ ÇАРАТАКАН. Шупашкарта кăсйе çаратса çÿрекен Александр Борисăва тытса арĕсленĕ. Вăл Ишлей районĕнчи Матакасси çынни, 55 çулта. Ийунĕн 20-мĕшĕнче çав вăрă Шупашкар хулинчи пасарта тата магазинсенче кăсйесене çаратнă.

Борисăв Чăваш республикĕнчи пасарсемпе хуласем тăрăх çÿресе, 20 çул хушши кăсйе çаратса пурăнат. Çакăншăн ăна пĕр хут суд та тунă тата милицине тыта-тыта хупнă пулнă.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНĂВ.

Учителсен институчĕшĕн

екстерн йĕркипе харпăрхăй тĕллĕн вĕренекенсен пур факультетсен те

çулахи итоглă çеççийĕ

1938 çулта ийулĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа августăн 1-мĕшчен пулат.

Çеççийе килнĕ чух вĕренÿ материалĕсем, простыньсемпе çытар пичĕсем тата паспăрт илсе килмеле.

2—1

Чăвашсен Педагогикă Институчĕн

харпăрхăй тĕллĕн вĕренекен студенчĕсен çулахи çеççийĕ 1938 çулхи ийулĕн 1-мĕшĕнчен августăн 1-мĕшчен пулат.

Занятисем ийулĕн 1-мĕшĕнче ирхине 9 сехетре пуçланаççĕ. Студентсем кайа йулмасăр срукра килмеле. Ним сăлтавсăрах килмесĕр йулнисем студентсен шутĕнчен тухаççĕ.

Пĕрле илсе килнĕ 3 çулхи таран ачасене вальли йаслĕ пур.

ДИРЕКЦИ.

Йĕпреçри „Спотара" савăтне шоферсем кирлĕ

Савăт дирекцийĕ патне пымала, йе Йĕпреç станцинчи вăрман оклатĕнче ыйтса пĕлме пулат. Шупашкарта „Спотара" кантурĕнче ыйтса пĕлме пулат, Гор. Чебоксары, Красноармейская, 5.

2—2

Уполномоченный Чувашглавлита №314

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 500.